**КОНТРОЛЬНЫЙ ЛИСТОК**
СРОКОВ ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач.

3 ТМО Т. 3.000.000 З. 2586—91

Читателям
ц. библиотеки г. Кумертау
от автора с лучшими
пожеланиями
20.10.2011 год.
п. Маячный А.Ахударов

84(2Рос=Чув)
Ч18 -45

САВЕЛИ УВАРĔ

# САВНĂ ЯЛĂМ - ЯМАНСАС

Калавсем. Сăвăсем.

60235-47764 ч/з 13
145

Стерлитамак-2010



## ЯМАНСАСĂН ХАСТАР АЧИ

Кумертау тăрăхĕнчи Маячнăй поселокра пурăнакан Алексей Михайлович Уваров (Савели Уварĕ) сăвви-калавĕсемпе «Урал сасси» хаçат урлă паллашма тÿр килнĕччĕ-ха. Хăйĕнпе паллашма, çырнă хайлавĕсен пуххине кăна алла тытса курманччĕ.

Пелепейре «Урал сасси» хаçат 20 çул тултарнине паллă тунă вăхăтра çулланнă, кĕрнеклĕ арçынпа паллашма май килчĕ. Çак çын Савели Уварĕ пулчĕ те.

- Сăвă-калав çырасси маншăн Г. Егоровăн «Воскресение шумеров» кĕнекине вуласа тухнă хыççăн пуçланчĕ, - терĕ çакскер. – Çавăн чухне чăваш халăхĕн историне лайăх ăнланса илтĕм, тăван халăхпа татах та мăнаçланма пуçларăм.

Алексей Михайлович Çтерлĕ тăрăхĕнчи Ямансас (Ишпарсово) чăваш ялĕнче 1946 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче кун çути курнă иккен. Унтах вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн, Çтерлĕри пединститутра ăс пухнă. Физикăпа матеметика факультетне

пĕтернĕ çамрăка 1969 çулхине Çар хĕсметне илнĕ. Çар хыççăн, 40 çул хушши физика вĕрентекенĕ пулса вăй хунă Алексей Михайлович. За долголетний добросовестный труд «Ветеран труда» медальпе хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

Тăван ялĕнчен инçетре пурăнсан та чăваш чĕлхине манман вăл. Çакă унăн хайлавĕсенче лайăх курăнать. Мĕн çинчен çыратьха автор? Пурăна- киле çамрăк чухнехи савни аса килет. Тăван тăрăхри Ямансас ялĕ те чуние çывăх ăна, çут çанталăк илемне сăнласа пама та ăста вăл. Поэзи-и вăл, е прозăлла хайлав – пурте, ман шутпа, чун-чĕре тĕпĕнчен шăранса тухнăскерсем.

Алексей Михайлович Пелепейре çул сиктерсе иртекен «Хавхалану çăл куçĕсем» поэзи фестивалĕн 2007 çулхи лауреачĕ.

Çак кĕске ум сăмахра Савели Уварĕн литературăри пултаруллăхне тишкĕрес шут çук манăн. Кĕнекепе паллашнă хыççăн вулакан хак патăр ăна. Автор çак хайлавсен пуххине Ямансас ялĕ 240 çул тултарнине халаллать. Вăл ял çыннисемпе республикăри пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн хăй еврĕлĕ парне пуласса шанатăп.

**Микул Ишимбай, писатель,**
**«Шур Атăл» литпĕрлешÿ правлени председателĕ.**



## Ямансас е Ишпарăс, хăшĕ тĕрĕсрех?

«Тайны деревни Ишпарсово» кĕнекинче (Стерлитамак-2007 г.) Василий Уваров кăтартнă тăрăх Ямансас ялĕ никĕсленнĕ 1770 çул.

Ялăн малтанхи ячĕ Ямансас пулнă, каярах ăна Ишпарсово тесе палăртма пуçланă.

Фронтовик, историк, кадрлă çар çынни, ентеш – Георгий Ломоносов тишкĕрнипе ку вырăнта маларах Ишпарс сутуçă тата икĕ пиччĕшĕ – Ильпарс, Юлпарс пурăннă. (газ.Сельская новь №53 – 1993г. Стерлитамак)

Виçĕ пичче пурăннă вырăн Казахстанран килекен çул хĕрри пулнă. Кунта вĕсем вăтам Азинчен килекен караваносене, Илекрен тăвар тиянă лавсене кĕтсе илнĕ. Ку тĕрлĕ товарсене перелле малтанхи юр çулĕпе, Хусан енне туртарнă. Хусанта вĕсен склачĕ, лавки пулнă. Унта Ильпарс суту-илÿпе ĕçленĕ.

Илек тăварне Бугульма ялĕнчен, Ашкадар пристанĕнчен Шур Атăл çийĕн сулăпа, баркаспа Кама енне юхтара пуçласан, сутуçăсен тупăшĕ ÿкнĕ. Çавăнпа та 1755 çул Ишпарс сутуçă хăйĕн çĕрĕ çине вунă çемье ытла Хусан енчи чăвашсене кĕртнĕ. Каярах, 1765 çул тата аллă çынна яхăн, Атăл енчи чăвашсем куçса килнĕ. Вĕсем Юлпарс çĕрĕ çине вырăнаçнă.

Ишпарсăн çĕрĕ Чатра лупашки Меçелька çырмипе пĕрлешнĕ çĕрте пулнă. Килнĕ чăвашсем çурчĕсене юханшывăн сулахай çыранĕнче, вăрманлă сăрт аркине лартнă. Ку никĕс вырăнĕсене, çуркунне, ешĕл курăк шăтма пуçласан, асăрхама пулать.

Хальхи Ямансас ялĕ, çырман сылтăм çыран хĕррипе, уçă хир енче, виçĕ çухрăм тăршĕ, ирĕклĕн тăсăлса ларать.

Сăртри вăрман хĕрринчен Стерлĕ хули, шихан тусем-

Юрактау, Куштау, Шахтау, Туратау алă тупанĕ çинчи пек çывăх курăнаççĕ

Çак илемлĕ те илпеклĕ вырăнсем сĕм авалтанах пушă пулман. Археологсем кунта 3-4 пин çул ĕлĕкрех çын пурăннă истори палăкĕсене тупнине пĕлтереççĕ. (История города Стерлитамака –Уфа 1994 стр.7)

Курганосене чавса, унти савăт-сапасене тĕпчесе Ишпарсовăра бронза саманинче, Куганакра тимĕр саманинче, Куштау (Йĕкĕр ту) таврашĕнче бронза саманинче пурăннă вырăнсем тупăннине çыраççĕ. Кунта сарматсен, савроматсен культури аталаннине пĕлтереççĕ, вĕсем çурçĕр-иран чĕлхипе калаçнине те палăртаççĕ.

Тĕрĕк чĕлхине тишкĕрекен ăсчахсем, чăваш чĕлхин тымарĕ те Иран çĕрĕсенче пулнă тесе шутлаççĕ. Апла пулсан, сармат йăхĕсем пурăннă вырăнсенче чăвашла калаçнă сассене илтме пулнă-шим?

Шихан тăвĕсенчен пĕрне ТУРАТАУ теççĕ. Ку сарматсенчен юлнă, чăвашла ТУРĂ ТĂВĔ тенĕ пекех илтĕнет.

Ямансасса 18-мĕш ĕмĕрсенче чăвашсем никĕсленĕ пулсан, чăваш чĕлхин сассисем юлман –шим тăван ялăмра?

«ЯМАНСАС»- пушкăрт сăмахĕ пулнийĕ палăрсах тăрать, чăвашлана куçарсан «ШУРЛĂХЛĂХ» тенипе тӳр килет.

Чăнипех те, шурлăхлă вырăнсем ялта халĕ те пур- Чатра лупашкинче, ĕлĕкхи шыв арманĕ вырăнĕнче, Кӳлĕ кассинче.

Шухăшăмпа, чăваш паллине «ИШПАРС» ятра шырамалла.

«ПАРС» сăмах пайне тишкĕрсе пăхсан чăвашла ПАР ĂС илтĕнет мĕншĕн тесен вырăс чĕлхинче «Ă» саспалли çухалать.

Авалхи тĕне кĕмен чăвашсен ячĕсем хушаматсăр пулнă.



Тин çуралнă ачасен ятне ик-виç илемлĕ те тарăн шухăшлă сăмаха пĕрлештерсе, кĕскетсе пĕр сăмахлă ят тунă. (НАРПИ- хитре пике, АРТУР- арçын Турă т. ыт. те).

Камран ĂС ыйтнă-ши чăваш çынни? Паллах, Турăран. Авалхи Мессопотамире шумерсем «Шурăмпуç çăлтăрне» (Венера планетăна) «ИШТАР» тесе палăртнă. Ун чухнех ăна «Юрату Турри», е «Турă Амăшĕ» тесе шутланă.

Çавна май, ачасене ят хунă чухне авалхи чăваш Турă Амăшĕнчен ăс ыйтса «ИШТАР, ПАР ĂС», кĕскетсе каласан «ИШПАРĂС» теме пултарнă, ытти чĕлхере вара «ИШПАРС» юлнă.

Чăваш халăхĕ мĕнле йывăр, хĕн-хурлă та асап-нушаллă кунçул витĕр тухсан та хăйĕн чĕлхине сыхласа хăварнă, чăваш сăмахне çухалма паман, хăй пурăннă таврари çĕрсене те чăвашла палăртнă.

Хальхи саманара пирĕн яла «Ишпарово» тенине час-часах илтме пулать. Ку пăшăрхантармасть мар. Вăхăт иртнĕçемĕн асăннă ятран чăваш компоненчĕ («С» саспалли) пачах çухалма пултарать.

Вырăсла ял- «ИШПАРСОВО» çырăнать пулсан, «ЯМАНСАС» – пушкăрт сăмахĕ тесен, тĕп чăвашла- «ИШПАРĂС» е «ИШПАРС» темелле пулать пуль.

Ку манăн шухăш пуçласа пичетре тухрĕ «Урал сасси» хаçатра 23 № 2000 çул.

**Автор.**

## Физпа Лир

### Новелла

Паян канмалли кун. Пĕтĕм тĕнче уçлăхĕнче вĕсем иккĕн çеç пыраççĕ тейĕн. Пĕр вунă çухрăм хыçалта вун виççĕмĕш компрессор станцине ĕçлеме килнĕ ик çĕр ытла студент юлчĕ. Бухараран Урала газ иртгерме чавнă пăрăх канавĕ те курăнми пулчĕ. Малта-пушă çеçен хир. Хутран-ситрен типĕ туратлă лутра тĕмсем çеç куçа лекеççĕ. Хĕвел каçалана сулăннă пулсан та,хаман кăвар пек хĕртет. Килнĕренпе, икĕ эрне хушшинче,тӳпере пĕр пĕлĕт катăкĕ те пулмарĕ.Палаткăра кăнтăрла тӳсме çук шăрăх. Çеçен хирте кăна уçăрах. Вырăнти рабочисем каланă тăрăх, канав хĕррипе пĕр сакăр çухрăм кайсан, вара сулахая пăрăнса тата виçĕ çухрăм утсан – кӳлĕ пулмалла. Çавна шута илсе, вĕсем канав хĕррипе сехет ытла утнă хыççăн, сулахая пăрăнса, кӳлĕ енне çул тытрĕç. Пĕр виçĕ çухрăм утсан, лутра пӳртсемлĕ ял курăнчĕ. Кӳлли çавăн хыçĕнче пуль тесе, хăвăртлăхне ӳстерчĕç. Çывхарсан, ак тамаша, казахсен кивĕ масарĕ пулса тăчĕ. Вилнисене чултан пĕчĕк пӳрт туса, çиелтен тăм шăлса пытарнă иккен. Ку тавçăру çамрăксене хăратса ячĕ. Вĕсем каялла çаврăнса канав еннелле васкарĕç. Уйта çитсен, кӳлĕ туртнипе тепĕр çул шырама пуçларĕç. Вăл тата пĕр пилĕк çухрăмран пăрăх канавĕ сылтăмалла пăраннă çĕрте, сулахай енче аран-аран палăрчĕ.Ку çул тăрăх хĕрпе каччă пушă çеçен хире пĕр хăрамасăр уттарчĕç. Анчах мĕн чуль утсан та,кӳлĕ тавраш курăнмарĕ. Шанчăк сӳннипе пăшăрханнă çамрăксем каялла çаврăнма шухăш тытсан çеç аякра сенкер куç пек çапçавракa пĕчĕк кӳлĕ йăлтăртатса илчĕ.

Çывăхарах пырса çитсен, кӳлĕ, çул çӳревçĕсене



хăйĕн илемĕпе тыткăнларĕ. Хĕррипе шап-шурă лилисем ӳсеççĕ,варринче,тарăн çĕрте, шыв çурхи тумлам пек тăп-тăрă.

Вĕсем саланса шыв хĕррине çывхарсан, каччă хĕрĕн яштака кĕлеткипе киленчĕ. Хĕр çакна сисрĕ, каччă куçĕнчен хăюллăн пăхрĕ. Çак хушăра шур чечексем хушшинчен çĕлен тухрĕ те пушă пек явăнса шыв çийĕпе ишрĕ.Ун хыççăн тепре,унтан тата. Виçĕ çĕлен умлăн-хыçлăн кӳлĕ варрине çитсе чечексем хушшинче çухалчĕç. Каччă чупсем ывăтса урăх çĕлен çуккине тĕрĕслерĕ те шыври лили хупахĕсене татса ишмелĕх çул турĕ. Чечекĕсене пикене парнелерĕ. Хĕр çĕленсенчен хăранипе шыва кĕме хăймарĕ. Çавăнса, шыва кĕрсе уçăлнă хыççăн çамрăксем апатланма ларчĕç. Мĕнле синкерлĕхе лекнине вĕсем халь тин ăнланса илчĕç. Хĕвел анса çитме тата пĕр ал лаппи кăна юлнă! Кăнтăр енче, экватора çывăх пирки, çулла та кунпа çĕр тăршшĕ пĕр пекрех пулать. Тăхăр сехетрех тĕттĕмленет. Кун çинчен вĕсем вуçех маннă-çке. Хăвăрт пуçтарăнса килнĕ çулпа каялла васкарĕç. Акă хĕвел те çухалчĕ. Çеçен хир хура чаршавпа витĕнчĕ. Çул йĕрĕ пачах та палăрмасть. Вĕсем канав патне çитме ĕлкĕреймерĕç. Малалла хăш енне каймалла? Çĕрлехи çул - çĕр çул, тенĕ çав ĕлĕкрех. Икĕ сехет утсан та, виçĕ сехетрен те канав хĕррине çав-çавах килсе тухаймарĕç. Хĕрĕ ĕсĕклесех йĕрсе ячĕ. Халĕ пĕтнипе кукленсе ларчĕ. Кӳлле шырама тухнишĕн хĕр хăйне айăпларĕ. Çуркунне пулса иртнĕ пăтăрмах çинчен пĕлнĕ вĕт вăл.

…Пĕррехинче çамрăк хĕр çеçен хире тюльпан татма тухнă. Çӳресен-çӳресен аташса кайнă. Виллине пĕр эрнерен тин шыраса тупнă …

Каччă хĕре лăплантарма тăрăшрĕ. Хирте скорпионсем пуррине пĕлсе, рюкзакĕнчен утиялне кăларса сарчĕ. Хăй те юнашар вырнаçрĕ.

- Уйламасăр утакан шăтăка чăмнă тет. Ку йывăрлăхран тухма май тупас пулать.Эпир канав хĕррипе кӳлĕ шыраса килнĕ чух, кăнтăр вăхăтĕнче, хĕвел çурăма хĕртетчĕ. Апла пулсан, çурçĕр енне утнă.

Сулахая пăрăнсан эпир хĕвел анăç енче пулатпăр. Халь канма ларнă вырăн та хĕвел анăç енчех юлать. Çапла пирĕн тӳррĕн хĕвел тухăç енне утсан кăна канав хĕрне лекме пулать. Хăш енче-ши хĕвел тухăçĕ? Çитменнине уйăх ку эрнере хĕвелпе пĕр созвездинче, çĕр варринче тӳпере вăл пулмасть, - саспа уйласа ларнă вăхăтра каччă сасартăк сиксе тăчĕ. – Акă вăл пире хăтаракани! Пĕчĕк алтăр аврĕн вĕçĕнче çунакан çăлтăр. Çĕр тĕнĕлĕ çак çăлтăр çине тĕлленĕ. Ыттисем пурте талăк хушшинче ун тавра çаврăнаççĕ. Ку пĕр вырăнта, çурçĕр енче, çунать. Çавăнпа Поляр çăлтăрĕ тенĕ ăна. Эпĕ питпе çăлтăр енне тăрсан - сылтăмра хĕвел тухăçĕ пулать.

Хăвăрттăн пуçтарăнса татах çула тухрĕç. Сехет çурă утсан вĕсен çулне хура тĕмсем пӳлчĕç. Ку канав хĕрри мар-ха, хайхи казахсен масарĕ. Кăнтăрла ку вырăн хăратнă пулсан, халĕ савăнтарчĕ, çĕнĕ вăй кĕртрĕ. Тĕрĕс çулпа утнине систерчĕ. Часах кĕтнĕ канав хĕрне çитрĕç. Çурçĕр Поляр çăлтăрне çурăм хыçне хăварса тата икĕ сехет утсан, вун виççĕмĕш компрессор станцийĕн çутти курăнчĕ.

Хĕр лăштах каччăн хул пуççисем çине уртăнчĕ. Вĕсен тутисем пĕрлешрĕç, хĕрĕн вĕри куççулĕ каччăн пичĕ çине тумларĕ. Çак истори хыççăн каччи физматра, хĕрĕ литфакра вĕреннине пĕлнĕ студентсем вĕсене Физпа Лир тесе чĕнме пуçларĕç.



# Виçĕ хурăн

Чăн пурнăçран

Пушкăрт çĕрне кăнтăр енчен кĕрекен аслă çулпа, 2-3 ĕмĕр каярах, Илекрен Стерлĕне тăвар турттарнă. Поташнăй ту çине хăпарсан чакăл сăрт курăнать. Ун айккинче, машинасен вăйхăвачĕпе усă курса этем пысăк та тарăн, хуран евĕр çĕр чавса кăмрăк кăларнă. Халĕ çав вырăнта çăлкуç пек таса кӳлĕ. Тахçан кунта кăмрăк кăларнине паян хула ячĕ аса илтерет: Кăмрăкту, пушкăртла – Кумертау.

Çамрăк хула урамĕпе пынă чухне çынсенче романтикăллă туйăм пурри сисĕнет. Акă кунта халиччен упранса юлнă Ленин палăкĕ. Урлă урамра çак хулара вертолет туса кăларнине çирĕплетекен макет.Ун çумĕнче - «Клондайк» текен пысăк мар сăра хупахĕ.

«Ылтăн сив чирĕ» кĕнекере Джек Лондон Клондайкра пулни çинчен çырса кăтартнă. Асăннă калавсене вуланă çын ку хупаха кĕрсе пăхмасăр пултараймасть, çав шутра – эпĕ те.

Шалта халăх «кĕрлет». Тулли кăкăрĕсене илĕртӳллĕ кăтартакан усă кĕпе тăхăннă çамрăк чиперкке кружкăна сăра ярса парсан, кĕске сухаллă арçын ларакан сĕтел хушшине вырнаçрăм.

Хăш-пĕр чухне пуйăсра е хупахра пуçласа курнă, кăмăла кайнă çынпа чĕре уçса калаçса ларатăн. Халĕ те çапла пулса тухрĕ. Паллашнă хыççăн пирĕн хушăра пурнăç çинчен калаçу пуçланчĕ. Манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм,Марк Кириллович, унпа санаторире пулса иртнĕ роман çинчен каласа пачĕ.

- Эпĕ пушкăрт çĕрĕн хĕвел тухăç енчи Яктыкуль санаторинче кантăм. Ку тăрăхра хуласем çук, аслă тата чугун çулсем те иртмеççĕ. Чул сарса хăпартнă çулпа санаторие кайнă чухне

лаша кĕтĕвĕ авалхи пек ирĕккĕн çӳренине куратăн. Кану çурчĕ сăрт аркинче, кӳлĕ хĕрринче, вырнаçнă. Пушкăрт чĕлхинчен «Яктыкуль» сăмах çутă кӳлĕ тесе куçарăнать. Чăн та, унти шыв тăп-тăрă. Хĕвел пăхнă чухне вăл ахах йăлтăркки пек çутатать. Сăрт çине улăхсан кӳлĕ тĕкĕрĕнче ылтăн çулçăллă шурă хурăнсене асăрхатăн. И. Левитанăн ӳкерчĕкĕнчен пĕртте кая мар. Ылтăн кĕркуннен ăшă кунĕсем пуçланнăран-тăр, çут çанталăк илемĕ мана тыткăнламаллипех тыткăнларĕ. Кăмăл асамлă вăй-хăватпа тулчĕ, ӳкерес туртăм çуралчĕ. Шкулта вĕреннĕ вăхăтра эпĕ алла час-часах кăранташ,киçтĕк тытаттăм. Анчах пурнăç ыйтнипе физика вĕрентекенĕ пултăм. Ӳкерме вара кунта канакан илемлĕ пике хĕтĕртрĕ...

Санаторие вырăнаçнă хыççăн тепĕр кун столовăйĕнче сенкер куçлă хĕр упраç ман çине тимлĕн пăхнине асăрхарăм. Хама тарăн авăра чăмнă пек туйса сывлама та чарăнтăм ун чухне. Пикепе паллашрăм.

Çавăнтанпа, каçхи апат хыççăн, кӳлĕ хĕррипе çума-çумăн утса, шăкăл-шăкăл калаçса уçăлса çӳреме пуçларăмăр. Эпĕ – 43-ри виçĕ ача ашшĕ, вăл – 22-ри ачасăр çамрăк хĕрарăм. Упăшкипе 4 çул пурăнса та пĕчĕккине тупайман иккен вĕсем. Тухтăрсем тĕрĕсленĕ хыççăн айăпĕ Ленăра пуль тенĕ, анчах нимĕнле чир те унра тупайман. Аптăранипе çамрăк арăм юмăç патне кайса килнĕ. Лешĕ ăна:

- Чĕрӳне юрату хĕлхемĕ çунтарма пуçласан тин ача çуратăн, - тесе ĕнентернĕ.

Çамрăк чун вутла çунса ĕлкĕреймен çав. Стерлĕ çывăхĕнчи тутар яле вырма вăхăтне командировкăна килнĕ çамрăк пушкăрт кĕске вăхăтра Ленăн пуçне çаврнă. Ирĕксĕрлесе арăм тунă хыççăн часах мăшăрланнă. Упăшки çуралнă тăрăхне - Иглинăна – килнĕ машинăпах илсе кайнă ăна. Çапла майпа пĕр çемьене пĕрлешнĕ мăшăр халĕ пĕр-пĕрне килĕштерсе, лăпкă пурăнать.

Ленăн шухăшĕпе, юмăç каланă юрату хĕлхемĕ çинчен кĕнекере кăна вуласа пĕлме пулать. Ку пĕтĕмлетӳпе килĕшсе пĕтменнине пĕлтерсе эпĕ юмăçа та шанма сĕнтĕм. Кашни çын пурнăçра кĕтмен çĕртен юрату чирĕпе чирлеме пултарать.

Пирĕншĕн пĕр эрне çу каçĕ пек сисĕнмесĕр иртсе кайрĕ. Ленăн канмалли вăхăт вĕçленчĕ. Ĕçри адреса илес сăлтавпа вăл юлашки кун хăй патне пыма ыйтрĕ. Пӳлĕмре унсăр пуçне никам та çук. Ыран упăшки машинăпа илме килессине пĕлтерсен Ленăн сенкер куçĕсем шывланчĕç. Чăтса тăраймарăм,ăна ыталаса кăкăр çумне хуллен пăчăртарăм. Çак вăхăтра пирĕн вĕри тутасем пĕрлешрĕç. Ар туйăмĕ тăвăлса килнĕрен çăмăл кевтеллĕ пикене койка çине йăтса хутăм. Вăл хирĕçлемерĕ.

Хыпаланса салтăнтарма пуçласан икĕ тулли писĕ кăкăр ывăçа лекни тата ытларах пăлхантарса ячĕ. Çак самантра иксĕмĕр те юрату сĕрĕмĕпе «ӳсĕрĕлтĕмĕр».

Кĕтмен хĕрарăм сасси пире тăна кĕртрĕ: «Ай! Турă çырлах! Алăка питĕрме те ăс çитереймен вĕт», - ятлаçнă пек пулса калла тухса кайрĕ. Ку Ленăн пĕр пӳлĕмри тантăшĕ пулчĕ иккен. Ытамри хĕр манран маларах тăна кĕчĕ.

- Çылăха кĕресрен пире пирĕшти хăтарчĕ пуль, - тесе тумланчĕ вăл. Кранри сивĕ шывпа питне çурĕ, унтан вылякаласа ман çине те, вучаха сӳнтернĕ евĕр, ывăçĕпе шыв сапрĕ.

- Çылăха кĕнĕ çынăн çемйинче телей çухалать, теççĕ. Ăна санăн та, манăн та çухатас марччĕ. Хамăн упăшкаранах ача çуратасса шанатăп-ха.

Çапах та тепĕр уйăхран Ĕпхӳре тĕл пулма сĕнчĕ.

Пĕррехинче, кăмпана кайсан, усланкăра висĕ хурăн ÿснине асăрхарăм. Парка икĕ хурăн, ыталанса тăнă евĕр пĕр тĕмрен тухнă, вĕсен хушшинче çинçе çамрăк хурăн (пепке тейĕн) çÿлелле кармашать. Çут çанталăк асамлăхĕ мана тĕлĕнтерчĕ те, савăнтарчĕ те. Тинех тавçăртăм: висĕ хурăн хыçне Яктыкуле ÿкермелле…

Палартнă кун Ленăпа калаçса таталнă пекех «Снежинка» кафене çитрĕм,хампа пĕрле –«Висĕ хурăн» картина. Тĕл пулу-ра Лена ман пекех хумханни palăрчĕ. Юрату чирĕ иксĕмĕре те аптăратнă çав. Вăл ача амăшĕ пуласси палли те çук иккен.

- Çылăха сапах кĕмелле пулĕ-ши? – куçран пăхса илĕртÿллĕн кулса илчĕ Лена.

- Çук. Васкама кирлĕ мар. Çылăха кĕмесĕрех эсĕ телейлĕ ача амăшĕ пуласса шанатăп. Парнене те çак шухăшпа, ырă сун-са паратăп, - тесе «Висĕ хурăна» Ленăна тыттартăм.

- О-о-о ! Картинăран вăй-хăват тапса тăрать! Чĕререн тав тăватăп!

Ку асамлă хурăнсене çывăракан пÿлĕме вырăнаçтарăп, - тесе пăлханса калаçрĕ хĕр упраç…

Уйăх ытла вăхăт иртрĕ. Çĕнĕ çул умĕн шăрçа пек тикĕс çырнă çыру илтĕм.Унта: «Хаклă Марк Кириллович! Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп! Сывлăх тата иксĕлми Юрату сунатăп. Эсир асамлă вĕрентекен! Сирĕн вăй-хăватăрпа ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕм çитрĕ. Юмăç калани пурнăçа кĕчĕ.

Чун-чĕререн сире юратакан вĕренекенĕр – Лена».

Ăсчахсем пĕлтернĕ тăрăх, сăмахсенче, юрату туйăмĕнче пысăк вăй – хăват упранать. «Висĕ хурăн» картинăра та çак ырă вăй пулчĕ- шим? – вĕçлерĕ калаçăва Марк Кириллович.



# Тинĕс тыткăнĕнче

## Калав

Кĕрхи тинĕс. Çÿллĕ те чăнкă çырана шыв хумĕсем чÿхесе лăпкаççĕ. Йĕри – тавра пĕр çын та курăнмасть. Аякра, шыв çинче, кăнтăра вĕçме тухнă хур кайăксем канаççĕ. Тухăçра ирхи шуçăмăн хĕрлĕрех сарă саплăкне шăтарса кăвар пек хĕвел тухать. Çутă пайăркисем шыв хумĕсемпе хутăшса тĕрлĕ тĕслĕ илемлĕ шăрçасем евĕр йăлтăртатаççĕ…

Артур хĕрĕхе çитет пулсан та тинĕс хĕрринче пулса курманчĕ-ха. Юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче ăна профсоюзран «çунакан» путевка сĕнчĕç. Санаторийĕ Азов тинĕсĕ хĕрринче – Бердянскинче – вырăнаçнă. Унта тĕрлĕ чир-чĕртен сиплеççĕ. Хăй вăхăтĕнче Максим Горький те пулнă çакăнта.

Ыратакан пилĕкне тÿрлетес шанчăкпа, унтан та ытларах мăшăрĕ хистенипе вăл аякри çула кăмăл еккисĕрех тухрĕ.

Поезд çине ларсан Çĕпĕр чăвашĕсемпе –Егор Васильчăпа тата ун ывăлĕпе – паллашрĕ. Евгений Артурпа пĕр çултах иккен.

Егор Васильчă – ватă салтак. Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче Бердянск хулине тăшмансенчен хăтарнă хыççăн вăл хÿхĕм те ырă кăмăллă украин хĕрĕпе тĕл пулнă, çавăнтах тымар янă. Халĕ хăй çуралса ÿснĕ тăрăхра ывăлĕпе пĕрле пулса курнă хыççăн килне таврăнать.

Пулăç пулăçа аякранах курать теççĕ. Çĕнĕ юлташсем те пулă фаначĕсем пулса тухрĕç. Çул тăршшĕпе хайсен пурнăçĕнче пулни-иртнине каласа пачĕç. Артур тинĕсре пулă тытса курма кăмăлĕ пуррине пĕлтерчĕ.

Санаторие вырнаçнăранпа виçĕ кун иртсен Егор Васильчă килсе те çитрĕ. Çыран хĕрриче çăмăл машина багажникĕнчен вĕртерсе хăпартмалли икĕ кимĕ кăларчĕ,ывăлĕн хатĕрĕсене Артура пачĕ. Тинĕсе тухас умĕн кирлĕ япалисене тепĕр хут тĕрĕслерĕç те умлăн-хыçлăн шыва кĕчĕç. Пĕр икĕ çухрăмран Егор Васильчă якорьне ячĕ, Артура пĕр çирĕм метртан пăрахма хушрĕ.

Икĕ сăналлă якорь, шыв тĕпне çитсен чулсенчен лексе кимме тытса тăрать. Тепĕр кантри, якорĕн тĕпĕнчен çыхни, вĕçĕ путăшпа (поплавокпа) шыв çинче выртать. Якорьне кăларас тесен путăшран туртатăн та тĕпĕнчи кантри ăна лекнĕ çĕртен пуçхĕрлĕ çавăрса вĕçертет иккен. Пуçласа курать пулсан та, çак вăрттăнлăх килĕшрĕ Артура. Вăлта та кăткăс мар: шăнăр çиппи вĕçĕнче – тăхлан муклашки. Çӳлерех виçĕ вăлта йĕппине черетпе, пусма картлашки пек, хушшисене пĕрер шит хăварса çыхнă.

Нимĕнле хулкки те, вăлта аври те çук. Лиман ăманне вăлтана тиретĕн те шыва яратăн, çиппине алă çинче тытса тăратăн. Вара пулăçăн чи телейлĕ вăхăчĕ пуçланать. Çак самантра хăй ятне те манса каять пуль вăл. Пĕтĕм уй-шухăшĕ - пулă çинчен.

Егор Васильчă каланă тăрăх, кунта бычоксем лекмелле. Акă, алă çинчи çип калт! Туртăннă пек туйăнчĕ. Артур ăна хăвăрт çӳлелле çĕклерĕ. Пур! Пуçĕ пысăк, кевтипе тĕсĕ ырашпăтри еврĕлĕрех. Вара вăл вăлтана пĕрре ярса виçĕ пулă лектерме вĕренсе çитрĕ. Пĕр сехетрен садокра çур пăта яхăн пулă пухăнчĕ. Ĕç хĕрсе пынипе Артур çил тухнине те сисмерĕ. Егор Васильчă ение çаврăнса пăхсан çеç кимĕсен хушши ӳснине асăрхарĕ. Пулăçăсем садокĕсене йăтса мулĕсене пĕр –пĕрне кăтартрĕç.



Ĕç тата малалла шурĕ. Ак тĕлĕнтермĕш! Хăма татăкĕ пек лаптак пулă камбала пулса тухрĕ. Çанталăк пăсăлнине шута илмесĕр ăнна пулăçă тата темиçе камбала туртса кăларчĕ.

Савăннипе Егор Васильчă çине куç ывăтрĕ. Хайхи аллисемпе сулса çыран хĕррине ишме ыйтать иккен.

Артур васкаса вăлтине пуçтарчĕ, садокне кимĕ çумне лайăххах çыхрĕ те якорьне çĕклес тесе вĕрентен туртрĕ. Анчах вăл вырăнтан та хускалмарĕ. Кимĕ çине уртăнса путăша ширарĕ. Якорь вĕренĕпе явăнса вăл шыва путнă иккен. Мĕнле кармашсан та алă çитеймест. Тинĕс тата хытăрах ахăра пуçларĕ. Вăл вĕренне касса татас шухăшпа кĕсйинче пекĕ шырама пикенчĕ. Тепĕр кĕтмен инкек! Вăл машинарах тăрса юлнă.

Тинĕс тыткăнне чăнласах лекнине ăнлансан Артурăн çурăмĕ сивĕ тарпа йĕпенчĕ. Сасси пур таран кăшкăрса, карттусне сулласа Егор Васильча хăйĕн патне ишме чĕнчĕ. Хумсем çӳлĕрен çӳлĕ хăпарнăран ватă арçын те курăнать, те çухалать. Юлташне инкекрен хăтарма ăнталчĕ пулсан та, çут çанталăк вăйне çĕнеймерĕ. Çил ăна çыран енелле илсе кайрĕ. Артур тинĕс хумĕсем хушшинче пĕр-пĕччен юлчĕ. «Хам аттесĕр ӳсрĕм, ман виçĕ ачан шăпи те çавнашкал пулĕшим?» – сасла хӳхлерĕ вăл. Çавăнтах хăйне алла илчĕ те, çăлăнма май шырама пуçларĕ. «Эй, Турă! Каçар мана! Инкекрен хăтăлма пулăш!» – терĕ ăшăнче. Хăйне хăй лăплантарнă май киммине тĕрĕслерĕ. Нумай пушаннă пулсан та сывлăшне тытать-ха. Ку – аван. Вунă килона яхăн пуллине тинĕсе силлерĕ. Якорь вĕренне епле татмалла?! Татах куртка кĕсйине ухтарчĕ. Шăрпăк курупки аллине лекрĕ. «Вĕрене çунтарса пăхсан?» – çиçрĕ шухăш. Курткипе хупăрланса йĕпе пăява вут тивертме тапратрĕ. Юлашки икĕ пĕрчине çутсан тинех тĕтĕм тухма пуçларĕ. Çунсан-çунсан

çулӑм сӳнсе ларчӗ. Вара арçын хуралнӑ вырӑна кӗсменпе (весло) каллӗ-маллӗ сӗрчӗ. Тинех ěç тухрӗ ! вӗрен татӑлчӗ.

Ирӗке тухнӑ кимме хумсем çыраналла хӑваларӗç. Пӗри, шухӑраххи, кинет çеç çавӑрса пӑрахрӗ те Артур шыв айне анса кайрӗ. Тӗппе çитсен вӑл урисемпе таптарса çиеле тухрӗ. Сывлӑш çавӑрса илейрӗ-и, çук-и тепӗр хум айне пулчӗ. Шывра пулӑ пекех ишекенскер çырана чиперех тухрӗ. Вӑйӗ пӗтнӗ тусне Егор Васильчӑ савӑннипе ыталаса илчӗ.

- Тинӗсре юлнӑ пурлӑхшӑн хуйхӑрмалли çук. Тинӗс парать, тинӗс илет,- лӑплантарчӗ ватӑ çамрӑкраххине.

Шыври киммине кӑларса арçынсем машина патне утрӗç.

- Ыратакан пилӗк те сипленчӗ пулас тинӗсре, - куларах каласа хучӗ Артур.

- Çапла вӑрçӑ вӑхӑтӗнче пирӗн те пилӗк ыратни часах иртсе каятчӗ, - сӑмах хушрӗ Егор Васильчӑ юлташӗн хутаçне пулӑсем хурса.

## Кӗтрет

Чӑн пурнӑçран

Кукамай каланӑ тӑрӑх, пирӗн сӑртри вӑрман кӗпер урлӑ каççан çырма хӗрринченех пуçланнӑ. Тӑван çӗршывӑн аслӑ вӑрçи вӑхӑтӗнче унта ӳсекен юмансене касса Çтерлӗ хулине турттарнӑ пирки сӗм вӑрман вырӑнне йывӑç тӗпӗсем çеç ларса юлнӑ.

Пӗр кун çав тункатасене кӑкласа пӗчӗк урапапа киле сӗтӗртӗмӗр. Клубра кино кӑтартасси пирки пӗве хӗрринче шыва кӗме ансан пӗлтӗм. Çӑл арман пӗвин чи тарӑн вырӑнӗ Микка çыранӗ тӗпӗнчеччӗ.

Вӑл чӑнкӑ та çӳллӗ, хӗрӗх метра яхӑн тетчӗç. Çав çырантан



хӗсметрен килнӗ çамрӑксем, ӳсse çитӗннӗ хӑюллӑрах арçын ачасем шыва чӑматчӗç. Эпир, пӗчӗккисем, вӗсем çырантан чӗкеç евӗр вӗçсе аннине пӑхса тӗлӗнеттӗмӗр.

Кунта шыва кӗме çамрӑксен кумирӗсем - кире пуканӗпе мечӗк пек вылятакан патвар та сарлака хулпуççиллӗ Кружка Шурки, пӗрремӗш купӑççӑ Исай Алюшки, ывӑнма пӗлмесӗр ташлакан Митька Коли те килнӗччӗ.

Пухӑннӑ ушкӑн хӗрсе кайса кино çинчен калаçатчӗ. Хӗвел вӑрман хыçне пытанма пуçласан пурте клуб енне васкарӗç. Эпӗ те çынсенчен юлмарӑм. Хӗсметне тинӗсре иртternӗ Ваçка механик, сарлака та лутра кӑна хахул, алӑк умӗнче билет сутса тӑрать. Аслисене çирӗм пуспа, ачасене пилӗк пуспа кӗртет. Клубра халӑх туллиех, хурт вӗлли пек кӗрлет, тӑма та вырӑн çук. Укçасӑр ачасен ушкӑнӗ юлсан, Ваçка механик Кружка Шурккине чӗнсе илсе алӑк умне тӑратрӗ, тулта ларакан моторне хускатса ячӗ. Çав каç эпӗ нумай тӗлӗнтермӗш куртӑм. Пӗррӗмӗшӗ – краççынсӑр лампӑ çап-çутӑ çуталчӗ, тӗтӗмӗ те çулӑмӗ те çук хӑйӗн.

Ваçка алӑк патне пырса вырӑсла тем каласан çутӑ сӳнчӗ. Шалта мотор шӑтӑртатма пуçларӗ, çутӑ ярӑмӗсем курӑнчӗç, музыка кӗрлерӗ. Ваçка клуб алӑкне хупрӗ те умне пырса тӑчӗ. Эпир чӳречесем патне чупрӑмӑр, анчах унта хушӑк та хӑварман.

Аптранӑ ачасем каллех механик умне пухӑнчӗç. Вӑл тем каларӗ те икӗ ача кӗрешме пуçларӗç. Çӗнекеннине Ваçка хӑй алӑк уçса кӗртсе ярать, аяла пулнӑ ачана çамкинчен виççӗ чиртсе кӗртет. Эпӗ ӑнлантӑм: кампа пулсан та кӗрешес пулать. Ман ума çӳлти урамри Макар Юркки пырса тӑчӗ. Вӑл манран виçӗ çул аслӑ. Ӑна- кӑна шута илмесӗр кӗрешме пуçларӑмӑр. Аванах тӑрмашнӑ хыççӑн вӑл çиеле пулчӗ те шала кӗрсе кайрӗ. Мана та

темĕншĕн чиртмесĕрех механик алăка уçса шалалла чăмтарчĕ.

Унта ниçта хĕсĕнме май çук.Шуркка мана йăтрĕ те: «Тытăр пĕчĕк паттăра, ярăр малалла», - тесе арçынсен пуçĕ урлă ывăтрĕ.

Пушă вырăн экран айĕнче кăна пулнă пирки, месерле выртса кино курма пуçларăм. Кунта мана тата тепĕр кĕтрет кĕтнĕ иккен. Чугун çул тăрăх килекен поезд хăвăрттăн ман çине тĕллесе пырать.Эпĕ урапсен хушшине пушăрах вырăна выртса юлас тесе куçа хупрăм та урай çумне лапчăнтăм. Часах клубра шăп пулчĕ. Çутă çутрĕç. Пурте ырă та сывă, клуб алăкĕ те яриех уçă. «Кинон пĕр урапи(катушки) пĕтрĕ, тепри пуçланать», - терĕç куракансем.

Савăнăçлăн, картина курнипе мăнаçланса киле таврăннă чух тата тепĕр кĕтрет курассине шутламан та. Çӳлти урампа киноран таврăнакан халăхсенчен уйăрăлса Типçырма пралуккине пĕчченех пăрăнтăм. Тĕттĕмре нимĕн те курăнмасть. Çул варринчи ăшă тусанпа ун хĕрринчи сивĕ курăка çара урапа чухласа çултан тухмасăр пыратăп.

Хамăрăн хапха умне çитсен мăйракаллă, кăваккăн – симĕссĕн çунакан куçсемлĕ, кăвар пек йăлкăшакан шăлсемлĕ «шуйтансем» умра вырнаçнине курах кайрăм. Эпĕ тăп чарăнтăм. Каялла çаврăнса тарас шухăш кĕчĕ. Хăранипе урасем хускалмаççĕ, кăшкăрма сас çук. Эпĕ çавăн пек тăнă вăхăтра клубран тухнă халăх Аялти урампа та иртсе кайса пĕтрĕ. Ял хуралçи те шакăртмапа шакăртаттарса Кӳлĕ касси еннелле утрĕ.

Ман умри «шуйтансем» çаплах пĕр сассăр, хускалмасăр выртаççĕ. Эпĕ хуллен кăна пĕр утăм малалла турăм, унтан тепре…



«Шуйтансем» хускалмарĕç. Хăю çитерсе вĕсем патнех пырса тĕтăм та мăйракинчен тытса пăхрăм. Ак тамаша! Паян кăнтăрла кукамайпа кăкланă тункатасем пулса тухрĕç вĕт. Тĕттĕмре çĕрĕкĕ кăвар пек йăлкăшать иккен.

- Кĕтрет урапапа мар, хăех кусать, - тенĕ çав халăхра.

## Тĕслĕх илни

Мустай Карим çирĕммĕш ĕмĕр вĕçĕнче: «Сăмах калама ирĕк пачĕç, анчах лайăх сăмах çук», - тени асра юлнă. Компьютерлă, мегафонлă, сериалсемлĕ, ырă тĕслĕхсемсĕр çирĕм пĕрмĕш ĕмĕр пуçланчĕ. Тен, çавăнпа та пуль, хальхи вăхăтра хитре пикесемпе ачаллă çамрăк арăмсем урамрах, сериалти геройсем пек, пĕр вăтанмасăр сигарет мăкăрлантарнине курма пулать. Ыттисенчен тĕслĕх илесси питĕ усал вирус пекех…

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен ырă-сывă таврăннă арçынсенчен ялта Макçăм ятлисем виççĕнчĕ. Вăрăм Макçăм, Хĕрке Макçăмĕ, Мельник(Мельников) Макçăмĕ. Вĕсен ячĕсем çеç мар, мăйăхĕсем те ӳкерчĕк çинчи Максим Горький евĕрлехчĕ.

Мельник Макçăмĕ йирĕнпе урам урлă çеç пурăнатчĕ. Клавди аппапа Макçăм пиччен виçĕ хĕрчĕ. Асли, манпа пĕр çулхи Аля, хăйсем патне хăналла выляма чĕнетчĕ. Унта Верапа Юля йăмăкĕсемсĕр тата кӳршĕрен тăваттăри-пиллĕкри ачасем Алюш, Нина, Клим килетчĕç. Макçăм пиччене ялти Кулибин тесе те пулатчĕ. Вăл куккуклă сехетсене, çĕлекен машинасене тӳрлетме, çăраççисем тума ăстаччĕ. Утарта хуралçă пулса ĕçленĕрен-ши, çăлтăрсемпе те кăсăкланатчĕ, хăй тунă

телескопĕ те пурччĕ унăн. Çавна май пире вăл уйăх çинче лупашкасем пуррине, Юпитер таврá тата темиçе планета-спутниксем çаврăннине тĕплĕн ăнлантарса паратчĕ. Кукамайпа анне Макçăма мухтаса: «Ăслă арçын, пур ĕçе те пултарать»,- тенине эпĕ сахал мар илтнĕ.

Шкула кайма вăхăт çитсен анне мана çĕнĕ сумкапа пушмак илсе пачĕ.

- Лайăх вĕрен, ăслă пул. Макçăм пек çăлтăрсене те тишкĕр, - тенĕччĕ вăл. Чăн та, алла аттестат илнĕ хыççăн аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕтĕм, астрономи учителĕ пулса тăтăм. Çак çитĕнӳсене тума мана кукамай та пулăшрĕ пуль тесе шутлатăп.

Çимĕк умĕн Макçăм пичче пӳрт тăррине шалчасем лартса вăрăм пралук карчĕ. Праçник кунĕ çитсен эпир, хамăр кас ачисем, Алясем патне пĕрремĕш радио курма кайрăмăр. Икĕ пысăк тӳмене хăлхасем çине тăхăнса ун ăшĕнчи çынсем калаçнине черетпе итлерĕмĕр. Шалта малтан хĕрарăм, унтан арçын сасси илтĕнчĕ. Эпĕ хĕрарăмĕ пĕр тӳмере, арçынни тепринче калаçать пуль тенĕччĕ. Сасартăк шалта хор юрласа ячĕ. «Çак пĕчĕк çаврашка ăшне çавăн чухлĕ çын мĕнле шăнăçнă-ши?»- кăсăклантăм эпĕ.

Макçăм пичче йăл кулса илчĕ те:

- Шкулта вĕренме пуçласан физикăна лайăх тĕпче, пурне те пĕлĕн, - терĕ.

Чăвашсемшĕн Çимĕк чи пысăк уяв шутланать. Ваттисене асăнма кашни килĕре икерчĕ, кĕлентĕр пĕçерессĕ, несĕлпе пухăнса пĕр-пĕрин патне сăра ĕçме çӳрессĕ. Ял юрăпа, купăс сассипе кĕрлет. Пирĕншĕн те, пĕчĕккисемшĕн, ку уяв пысăк савăнăç.



Клавди аппа та хăнасене кĕтсе сĕтел çине апат-çимĕç, шурă ăшлă витрепе сăра лартрĕ. Хăнасем пуçтарăнсан сĕтел хушшине малтан арçынсем, унтан хĕрарăмсем вырăнаçрĕç.

Сăмах радио çинчен пычĕ.

- Малашне яла çутă кĕртессĕ. Ун чухне радио, пысăк курупка евĕр, калаçни пурне те илтĕнмелле пулĕ,- сăмахларĕ Макçăм пичче.

Малти пӳлĕмрен, сапунĕн аркипе хупласа, Клавди аппа пĕр графин шĕвек илсе тухрĕ. «Кăна çуркунне, шыв ансан, милицисене çӳреме çул пĕтнĕ вăхăтра юхтарнăччĕ», - текелесе арçынсене вирĕшер пĕчĕк курка ярса пачĕ. Хĕрарăмсенчен ĕçекен пулмарĕ. Графинта юлнă эрехне каялла арча ăшне лартрĕ те çăраççипе питĕрчĕ. Уççине саппун кĕсйине чăмтарчĕ. Хăнасем купăс каласа юрланă хыççăн Клавди аппана тав туса тепĕр киле кайма пуçтарăнчĕç.

- Эсир ниçта та ан кайăр, кунта выльăр. Ларса апат çийĕр,- хытарса хăварчĕ Клавди аппа Аляна.

Эпир хăналла выляма пуçларăмăр. Сĕтел хушшине малтан эпĕ, унтан манран кĕçĕннисем, Алюшпа Клим, тата виçĕ хĕрача лартăмăр. Аля амăшĕн саппунне çыхса ячĕ. Кĕсйинчен çăра уççи кăларчĕ те арчине уçса хайхи графина илсе тухрĕ. «Ку эрехе арçынсем валли юхтарнă», - текелесе мана пĕчĕк курка çине ярса пачĕ. Эпĕ арçынсем пек тĕппипе умлăн-хыçлăн виçĕ курка янклаттартăм. «Алюшпа Клим пĕчĕккĕ-ха, вĕсене памасан та пырĕ»,- тесе Аля графине арчана питĕрсе хучĕ. Ман умри сĕтел çиĕ тайăла пуçларĕ. Унăн кĕтессинчен тыткаласа ура çине тăтăм, Аляна тав туса килелле тухса утрăм.

Урам урлă каçнă чух çĕр лаптăкĕ те пĕр енчен тепĕр енне тайăлчĕ. Çапах пӳрт умне çитсен алăка тĕреленĕ патака илсе,

шала кӗрсе выртрӑм, хӑсма та пуҫларӑм.

Шывран килнӗ анне мана курсан хӑраса ӳкрӗ.

- Мӗн пулчӗ сана капла? - ыйтрӗ вӑл пуҫа, хырӑма тытса пӑхнӑ хыҫҫӑн.

Карьерта чул ҫунтарнӑ ҫӗрте ӗҫленӗ пирки вӑл шӑрша туйми пултӑм тетчӗ.

- Эсӗ вырт, эпӗ тухтӑр Лида патне кайам-ха, - терӗ те вӑл пӳртрен тухрӗ. Часах хӑнаран кукамай килчӗ. Вӑл сыпӑсем лартма, тӗрлӗ курӑксемпе чирсене эмллеме пӗлетчӗ. Эпӗ мӗнле чирпе чирленине те тӳрех тавҫӑрчӗ. Алясемпе хӑналла выляннине, виҫӗ курка эрех ӗҫнине пӗлсен:

- Э-э, апла пулсан сана мухмӑртан чӗртмелле вӗт, эмелне илсе кӗрем-ха, - терӗ вӑл тулалла тухнӑ  май. Мӑнукне чунтан юратакан кукамай пӳрте вӑрӑм хулӑпа кӗчӗ. Мана ӳпне выртма хушса кутран виҫӗ хут хулӑпа чашкӑртрӗ.

- Ку сана малашне камран мӗнле тӗслӗх илмелли пӗлӳ пулӗ, - терӗ вӑл хыттӑн.

Эпӗ чиртен сывалтӑм. Кукамайӑн урокӗ ӗмӗрех асра юлчӗ.

## КОЛХОЗ ЛАШИ МЫСКАРИ Е 54 «ЕХИМ ВАСИЛЬЧ»

«Эпӗ пурнӑҫран пилӗк ҫул тултариччен ӑс илтӗм, ҫавна вара ватӑличчен ҫырса пӗтерейменӗм»,- тенӗ Лев Толстой пӗр кӗнекинче. Ҫавӑн пек нумай хулӑн кӗнеке кӑларнӑ ҫыравҫӑсене 21-мӗш ӗмӗрти пурӑнӑҫӑн пилӗк кунне кӑна кӑтартма май пулсан тата миҫе кӗнеке ҫырса кӑларӗччӗҫ- ши вӗсем? Е Лев Толстой Сан – Францискори Джек Лондон сӑмах ӑстипе «сотовӑйпе» калаҫса илсен тата телекурӑмра космонавтсене,



хӑйсен йывӑрӑшне ҫухатса, космосра тӗк пек вӗҫсе ҫӳренине асӑрхасан, ку чӑн пурнӑҫ мар, суя халап тесе ҫырма та пӑрахмӗччӗҫ-ши? 20-мӗш ӗмӗрӗн варринче те пире, пиллӗкри – ултӑри ачасене, тӗлӗнмелли ялта чылаях тупӑнатчӗ.

Хӗлле пурте кил картинчи юрпа пуянчӗ. Улӑмпа витнӗ кил – ҫуртсен кӑмака мӑрйи ҫеҫ юр капанӗнчен курӑнса ларатчӗ. Эрни-эрнипе кӑтӑракан тӑмансенче ҫав мӑрьесенчен кӑна:

- Хӑта, сӑра ӗҫме пырӑр, карчӑк сӑра вӗретрӗ, - тесе йыхӑрса хӑваратчӗҫ.

Ҫулла, ҫырма хӗрринчи шыв арманӗ патне ансан, акӑшмакӑш кустӑрмине шыв вӑйӗ пӗр ывӑнмасӑр ҫӑмӑллӑн ҫаврӑни питӗ илӗртетчӗ. Килте алӑ арманӗн юманаскине мӗкӗрленсе, тар юхтарса ҫаврӑсан та кӗрпи пӗрре пӗҫермелӗх кӑна пулатчӗ. Кунти шыв арманӗн виҫ хӑлаҫлӑ, пукан ҫӳллӗш чул кусттӑрмийӗ кунӗн- ҫӗрӗн ҫаврӑнсан, 60 пӑт ыраша ҫӑнӑх туса кӑларать тетчӗҫ. Ача мӗн курать, ҫавна тӑвать. Нумай ырӑ енсене эпӗ Ехим кукаран курса вӗреннӗ. Унӑн виҫӗ ывӑлӗ те манпа тантӑшсем пулнипе- ши е вӑл урам арҫын ачасем йышлипе-и- вӑрҫӑлла вылямa ҫав касран пуҫлаттӑмӑр. Нумай калаҫма юратман куккапа мунча кӗнӗ чух, унӑн ҫурӑмӗ ҫинчи суран ҫӗввисене асӑрхасан, вӑл пире вӑрҫӑ ҫинчен кӗскен каласа панӑччӗ.

- Вӑрҫӑ вӑл - питӗ йывӑр, усӑсӑр ӗҫ. Вӑрҫӑ пуҫлансанах, мана бронь парса, Ҫтерлӗре снаряд тарӗ\порох\ кӑларакан завод ӗҫлеттерчӗҫ. Кайран К. Рокоссовский ҫарӗнчи зенитпа артиллери полкӗнче снарядсем парса тӑракани пултӑм. Белоруҫҫи вӑрманӗсенче шурлӑхсем тӑрӑх пушкӑсем сӗтӗрме тӳр килчӗ.  Ку суран Польшӑра самолетсем бомба пӑрахнӑ вӑхӑтра пулчӗ.  Нимӗҫсен самолечӗсем вӗҫсе иртсен таврара эпӗ кӑна чӗрӗ юлнӑн курӑнчӗ, ҫурӑма пӗҫертнине пӑхмасӑр, эпӗ

пушкăна майлаштарма пуçларăм. Çав вăхăтра офицерсен машини пырса чарăнчĕ. Ман пата К. Рокосовский хăй пырса алла чăмăртарĕ. Теветлĕ пулнăшăн : «Наградить солдата медалью «За отвагу»,- тенĕччĕ.

Пĕр осколок лекнипе суран çĕвви юлчĕ. Тимĕр ўте кĕрсе капăрка шăммисем хушшинче чарăннă, чĕре патне кăшт çитеймен Госпитальтен виçĕ кунтан сиплене тухрăм. Вара хамăрăн полкпах, Берлин таврашăнче, Америкăн салтакĕсемпе пĕрлешсе, вăрçа пĕтертĕмĕр. Анчах киле юр çума пуçласан тин ячĕç, - сăмахлатчĕ кукка..

Çапла вара арçын ачасемпе вăрçăлла выляна чух, пирĕн хамăр хушăра «Рокосовский» тата «Белорусь», «Польша», «Берлин» çарĕсем пурччĕ.

Пĕррехинче куккапа кăсăк ĕç пулса иртнĕ хыççăн пирĕн ушкăнта «Колхоз лаши» вăйă та «çуралчĕ». Пĕчĕк урапа çине ачасем тиенсе, пĕрне хал кайиччен сĕтĕрттерекенчĕ. Куккан мыскарийĕ, виççĕмĕш бригадăн Ландыш ят хунă лашипе, прочиска вутти турттарнă чух пулать. Тиенĕ çăка сăртри вăрмантан чиперех сĕтĕрсе килсе кĕпер урлă каçсан, чăнкă кăна сăрт умĕнче лаша тăп чарăнать, малалла мĕнле хистесен те пĕр утăм та утмасть. Кукка хулăпа та хĕнесе пăхать, лаша кайри урипе туртаран лаç тапать те малалла лĕм те тумасть.

- Э – эх, колхоз лаши – и, - тесе тарăхса, шеллесе тăварать лашана, чĕлпĕрне тимĕрçĕ лаççин юпинчен çыхса турта-сем хушшине хăй кĕрсе тăрать. Лаша çăкне ăнтăлса сĕтĕрсе тăвалларан тикĕс вырăна çитерсен, шыва анакан Артис арăмĕ хирĕç пулать.

- Эй, Тур – Тур, Ехим пичче, çынна тĕлĕнтеретĕн, лашасене ĕçсĕр хăваратăн ку вăйупа, - тенине хирĕç:



- И – и, Агафи йăмăкăм, машинасене нумайрах кăлара пуçласан лашасем мар, хамăр та ĕççĕр юлăпăр – ха, - хуравлать кукка.

Ку тамаша хыççăн конюхсем лаша вăйне «Ехим Васильчăпа» виçетчĕç. Лашара пĕр «Ехим Васильча» та çитейменнисене ĕçкĕрт хывнă çĕре улăм турттарма яратчĕç. Колхозра тырă вырмалли пĕр комбайн РСМ – 8 пурччĕ, ăна ДТ – 54 трактор сĕтĕретчĕ. Шўт тума юратакан Хĕветĕр: «Кунта Ландышăн 54 лаша вăйĕ кăна мар, 54 «Ехим Васильч» вăйĕ, - тесе юптаратчĕ.

## ГИТАРА

Гитара - авалхи инструмент. Ун евĕрлĕрех тăвата хĕлĕхлĕ кĕвĕ хатĕрĕ темиçе пин çул каярах Месопотамире пулнă. Каярах Вавилонра ун резонаторне кавăнтан мар, йывăçран тума пуçланă. Арабсем ăна «аль уд», авалхи грексем « кифара» тенĕ. Историксем палăртнă тăрăх, ултă хĕлĕхлĕ гитарăпа музыкантсем вун виççĕмĕш ĕмĕрте выляна. Паянхи кун унпа мĕнпур патшалăхри халăх çынни – артистсем, туристсем, моряксем, космонавтсем те выляççĕ. Мĕнпе илĕртет - ха çак асамлă инструмент? Паллах, хăйĕн пуян сассипе.

« Гитара – хăй пĕр оркестр», - тенĕ Людвиг ван Бетховен. Испани композиторĕ Ф. Таррега çырнă «Хота» вариацине гитарăпа каласан кларнет, флейта, тамбурин сассисене илтетĕн. Çамрăксемшĕн те çурăм хыçне çакса çўреме майлă та çăмăл инструмент вăл.

Чăн – чăн артистсем гитарăпа выляннине эпĕ пединститутра вĕреннĕ вăхăтра курнăччĕ. Стерлĕ хулине Молдавирен чикансем килнĕччĕ. Паянхи пек астăватăп, билет тенкĕ те вунă пус тăратчĕ. Паллах, студентшăн сахал марччĕ ку. Сехет çурă

пынӑ концертри юрӑсемпе ташӑсене кӗвӗпе виҫӗ гитарист «илемлетрӗ». Питех те асра юлчӗ: «Испанский танец Хота» – тенӗ кӗвӗ. Ҫак тӗлӗнмелли уяв килӗшрӗ тени питӗ сахал. Концерт ман чунра халиччен ҫывӑрнӑ музыка туйӑмӗсене вӑратрӗ, пӑлхатрӗ. Ҫапла вара гитарӑпа калама вӗренес шухӑш ҫуралчӗ. Анчах ку ӗмӗте пурнӑҫлама гитара туянмалла. Эпӗ уйӑхне ҫирӗм тенкӗ стипенди илеттӗм. Килтен укҫапа пулӑшу ҫук. «Музтовары» лавккара 9 тенкӗ те 50 пус тӑракан гитара куртӑм, унтах тенкӗ ҫурӑлӑх «Самоучитель» те пур. Вун пӗр тенкӗ ӑҫтан тупмалла? Ку кӑткӑс «задачӑн» хуравне тупрӑмах.

Иккӗмӗш курсри хӗллехи экзаменсем хыҫҫӑн каникул пуҫланчӗ. Икӗ эрне килте пурӑнма укҫа кирлӗ мар. Ҫавна шута илсе кӗсьере юлнӑ нухратпа чун ыйтакан тупрана кайса илтӗм.

Канмалли кунсенче Ҫтерлӗрен тӑван яла ҫурӑм хыҫне рюкзак ҫакса йӗлтӗрпе ҫӳреттӗм. Ишпарӑс яле ҫитме хула хӗрринчен 12 ҫухрӑм каймалла. Хальхинче ҫула, ҫурӑм хыҫне гитара ҫакса, хаваслӑ туйӑмпа тухрӑм.

Заводсем нумай пулнӑ пирки Ҫтерлӗ хулине иккӗмӗш Чикаго тетчӗҫ. Эпӗ вара хама ковбой хӑйӗн юратнӑ кӗвӗ инструменчӗпе прерире (ҫеҫенхир) васканӑн туятӑп. Хӑлхара – «Хота» кӗвви, «лашам» юр ҫтийӗпе чупать.

Асав сӑрчӗ ҫине хӑпарсан хӗвелӗ те ҫутӑрах, сывлӑшӗ те уҫӑрах. Таса юр ҫинчи ахах-мерченсен йӑлтӑрккисем куҫӑма тирӗнеҫҫӗ. Темӗнле асамлӑ Улӑпсем ӗҫлесе хӑпартнӑ евӗр, тӳремлӗхре Египет пирамидисем пек, тӑватӑ ту тӳпенелле карӑннӑ. Ку- Шихан тӑвӗсем. Вӗсен хыҫӗнче, ҫӗрпе пӗлӗт пӗрлешнӗ ҫӗрте, тӑтӑш вӑрман. Ялӑм Шур Атӑлӑн пӗчӗк юппинче - Меселька ҫырми хӗрринчи айлӑмра – выртӑнаҫнӑ.



- Ахланма ҫулу ҫитет, халь тин гитара калама вӗренейӗн – ши?- иккӗленет анне.

«Ахаль лариччен кӗрӗк арки пулсан та йӑвала», - теме юратнӑ ман кукаҫи. Вӑл – кӗрӗк ҫӗвӗҫи. Кукаҫи сӗрме купӑспа, атте хут купӑспа выляниине анне пӗрре мар каланӑ.

«Ӑс – тӑна мӗн виличчен пухас пулать, палӑртнӑ ваттисем. Ҫавӑнпа вӗренекен кая юлмасть»,- тесе музыка теорине путрӑм.

Нотӑсем тӑрӑх хӗлӗхсенчен сасӑ кӑларасси маншӑн матанализ предметӗнчен те кӑткӑсрах пулчӗ. Мӗнле тӑрӑшсан та каникул хушшинче нотӑсем вулама вӗренеймерӗм.

Ҫу ҫитрӗ. Экзаменсене ӑнӑҫлӑ панӑ хыҫҫӑн стройотряда ҫырӑнтӑм. Пушкӑрт ҫӗрӗнчен ик ҫӗр ытла студент «Бухара – Урал газопровод» стройкине кайрӑмӑр. Унта эпӗ Женя Масленников студентпа паллашрӑм. Вӑл гитарӑпа ӑста калатчӗ. Нотӑсем ҫине пӗрре пӑхсах кӗввине кӑларатчӗ. Унӑн пиччӗшӗ композитор – музыкант иккен. Мана та ҫӑмӑлрах этюдсем вӗрентрӗ, тӗнчери паллӑ гитаристсен произведенийӗсемпе паллаштарчӗ.

Эпӗ тепӗр хут гитара чирӗпе чирлерӗм. Стройкӑра ӗҫлесе илнӗ укҫапа пысӑкрах инструмент туянтӑм. Пушӑ вӑхӑтра ҫине тӑрсах кӗвӗ вӑрттӑнлӑхӗсене тӗпчерӗм. Маншӑн тепӗр кӑсӑк тӗнче уҫӑлчӗ.

Институт пӗтернӗ хыҫҫӑн хӗсмете кайрӑм. Пӗрремӗш кунсенчех гитара мана салтаксем хушшинче палӑрма пулӑшрӗ.

«Стариксем» пӑсӑлнӑ инструментпа каланине илтсен хӗлӗхӗсене майлаштарса патӑм, «Хотӑн» пӗр пайне выляса кӑтартрӑм.

- Маэстро, сбацай испанскую, - сӗнетчӗҫ каярах.

Юрӑ юрлама кӑмӑл уҫӑлсан та гитара маншӑн чи ҫывӑх тус шутланать.

# КĂВАК АВТАН

Мифпа легендăсем тăрăх, Будда Турă çĕр çинчи чĕр чунсене канаша чĕнет. Кунта йĕке хӳре, вăкăр, тигр, мулкач, аçтаха, çĕлен, лаша, сурăх, упăте, автан, йытă, хир сысни килеççĕ. Будда кашни чĕр чуна пĕр çулталăка ертсе пыма хушать. Çапла вара автан та кашни 12 çултан пĕрре хуçа пулса тăрать.

Автан çулĕнче çут тĕнчене килнĕ ача хăюллă, тăрăшуллă,хăй çине шанакан çын пулса ӳсет, теççĕ астрологсем. Тĕслĕхрен, Чăваш Ен паттăрĕ В. И. Чапаев автан çулĕнче çуралнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçиñĕ те çав чĕр чун çулĕнче çĕнтерӳпе вĕçленнĕ. Космоса пуçласа спутник яни те çав çулах пĕр килет…

…Шурă тăмпа шăлнă, икĕ чӳречеллĕ, улăм тăррилĕ çуртра кукамăшĕпе мăнукĕ тата вăрмана, хыр ӳстерекен питомнике, ĕçе çӳрекен амăшĕ пурăннă. Вĕсене кашни ир уçă сасăллă автан вăратнă. Питĕ илемлĕ пулнă вăл: кăвак çинче шурă пĕрчĕллĕ, çунаттисем асамат кĕперĕ евĕр. Тĕрлĕ тĕслĕ автанпа витери икĕ чăхха тулăпа, сăсăл ярса пăтратнă пиçнĕ çĕр улмипе сăйланă. Кукамăшĕ чăххисене: «Кăть – кăть – кăть! Килĕр, суйлăр, аванта-рах çийĕр. Мăн куна çăмарта тăвăр», - тесе хистенĕ. Автана: «Кил, кил,Петруç! Чăххусене вăйлăрах юрат.

Сан пек маттурскерсем йышлăрах пулччăр», - тесе чĕннĕ.

Пĕррехинче, хаяр та сивĕ хĕл кунĕнче, автанăн киккирикĕ шап – шурă пулса кайнă. Кинемей вара кайăк – кĕшĕксене шеллесе киле илсе кĕнĕ, кăмака айĕнче усранă.

Пĕлтĕр пулса иртнĕ пăтăрмаха та астăвать – ха Петруç.

Ун чухне вăрман хĕрлĕ – сарă тум тăхăннăччĕ. Хур кайăксен карти те «кăрлик-кăрлик!» тесе вĕçсе иртрĕ. Вăрçăран йывăç урапа таврăннă кил хуçи арăмĕн пиччĕшĕсем нимене килнĕччĕ. Пахча-



ри çĕр улмине кăларса пĕтерсен, вĕсем автансене тытма пуçларĕç. Кăвак автан эран тарса пытанчĕ. Пахча хыçĕнчи çĕмĕрт айне кĕрсе ларчĕ. Çавăнтах çĕр каçма юлчĕ.

Тӳпере çурла уйăх курăнсан, çуртсенче краççын ламписем çутрĕç. Кил хуçи купăсĕпе илемлĕ кĕвĕ калама пуçларĕ, юрă юрлани те илтĕнчĕ.

Çутăла пуçласан автан турат çинчен вĕçсе анчĕ. Пăс – пăс! Тăвакан йĕплĕ чĕрĕпе курсан, хăраса вăрманалла ытканчĕ. Чупнă çĕрте чупрĕ, утнă çĕрте утрĕ вăл. Каçалапа пĕр уçланка килсе тухрĕ. Хĕвел çаврăнăш ӳсет иккен кунта. Халран кайнă автан ун аври çине вĕçсе хăпарса канма ларчĕ.

«Йывăç уралла хуçана урăх курайăмăп-шим? Ун купăсĕн илемлĕ кĕввисене тек илтеймĕп-шим?» – текен шухăшсем унăн куçĕсенчен куççуль тумламĕсем пăчăртаса кăларчĕç.

Ир пулчĕ. Кĕтмен – туман çĕртен кукамăшĕпе мăнукĕ урăх ял-тан пĕчĕк урапа туртса килсе тухрĕç. Мăнукĕ автана курсанах ăна йăпăр – япăр ярса тытрĕ те: «Пирĕн хĕвел çаврăнăш анин хуралçи мар – и ку?» – терĕ. Хĕвел çаврăнăш пуçĕсене шĕкĕлчеме пынă амăшĕ:

- Эй, тур – тур, епле илемлĕ чăпарккаç тупнă эсир?! Пӳрни пӳрт хыçнех килет çав, - терĕ хĕпĕртесе.

…Акă кăвак автан каллех улăмпа витнĕ пӳрт тăрри çине вĕçсе хăпарчĕ. Тӳпене вĕçме хатĕрленнĕ пек, асамат кĕперĕ евĕр çунаттисене шаплатарса илчĕ те : «Ку-ка-ре –куу!» – тесе уçă сассипе пĕтĕм тĕнчене янăратрĕ. Ăна хирĕç темиçе автан черет-пе сас пачĕ. Çавăнтах витери йăвара чакаланакан шурă чăххи: «Кăть-кăтик!» – тесе сиксе тухрĕ. Петруç та тăнă çĕр - те чăх евĕр кăтиклеме пуçларĕ. Пӳрт умĕнчен юхса иртекен çурхи шывпа

пĕвелле вылякан мăнукĕ чăх юррине илтрĕ те кĕреçине пăрахса йăва патне ыткăнчĕ.

- Кукам-а-ай! Икĕ çăмарта тупрăм, - хĕпĕртесе кĕчĕ пÿрте арçын ача.

- Апла, хура чăххи те пуçланă пуль. Мăн куна пĕветнĕ çăмартасем пулĕç ак, - саванчĕ кукамăшĕ те.

- Мĕншĕн хура чăххин те çăмартисем шурă? – тĕпчерĕ мăнукĕ.

- Турă çапла хушнă – тăр.

- Автанĕ те кăтиклерĕ чăх пекех. Унăн çăмарти ăçта – ши?

- Хи – хи, - кулса ячĕ ватă,- унăн çăмартисем тимĕр, хăйĕн тĕслех пулаççĕ. Анчах та автан вĕсене питĕ вăрттăн тăвать иккен те шыраса тупаймăн.

Мăнукĕ тимĕр çăмарта тупас тесе автан хыççăн виçĕ кун йĕрлерĕ. Шыраман вырăн хăвармарĕ. Çук, тупаймарĕ.

Çĕршыв типсе курăк ешерме пуçласан, автанпа икĕ чăх умри пилеш айĕнче кунĕпех чакаланчĕç. Çак вырăна кÿршĕри чăхсем килсе çÿрерĕç. Автансем те темиçе хут киле-киле кайрĕç.

Анчах, Чăпаркка Петруç, вĕсене çывăха та ямарĕ. Чĕп – чĕрĕ юна пĕвенсе килĕсене танккарĕç вĕсем. Пилеш айĕнчи вĕлтĕренпе хупах айне шупка кĕрен чăх вăрттăн йăва çаварчĕ. Çавăнтах юла пуçларĕ.

Çу варринче шурă чăххи пĕчĕк чĕпписене ертсе тухрĕ. Пĕр-ик кунтан шупка кĕреннин вăрттăн кăларнă чĕпписем çав кĕтĕвех хутшăнчĕç. Пĕчĕкскерсене çитерме тухсан автана та мухтама манмарĕ ватă:

-Кур- ха, мăнукăм, хайхи автанăн мĕн чуль тимĕр çăмартийĕсем тупăнчĕç! Пурте хăй пек чăпарккасем пулнă тата. Тепĕр çул та çак Чăпаркка Петруçах хуçа пулма хăварас пулать пуль…



## Диалогри телей

Ялти кивĕ шкулăн пĕр пÿлĕмне хваттерĕнче пиллĕкĕн пурăнаççĕ. Икĕ пĕчĕк ывăлне амăшĕ çывăрма вырттарать.

Ашшĕне 1-м ĕ ш класра вĕренекен хĕрĕ сĕтел хушшинче урокĕсене хатĕрлеççĕ. Хăйĕн ĕçĕсене вĕçленĕ хĕр пĕрчи:

- Атте, мĕншĕн эсĕ те уроксем тăватăн?

- Манăн ĕçĕм çапла.

- Кунта мĕн ÿкернĕ?

- Синхрофазотрон…

- А –а – а…

Вăтăр çул иртсен. Кукашшĕ хĕрĕсем патне хулана килчĕ. Мăнукĕсемпе чей ĕçсе ларать. Кĕçĕнни кукашшĕнчен тĕп-чет:

- Мĕншĕн космонавтсем хăйсем пур, вĕсен йывăрăшĕ çук? Эпир пÿлĕмре çăмăл тĕк пек вĕçсе çÿрейместпĕр – çке.

- Уи пекки çĕр чăмăрĕ тавра пĕр çекунтра сакăр çухрăм хăвăртлăхпа вĕçсен кăна пулать.

А – а – а…

Çав хушăра хĕрĕ ĕçрен таврăнать.

- Хĕрĕм, ĕçе те уяври пек хитре тумпа çÿретĕн – и?

- Пирĕн çавра сĕтел пулчĕ.

- Мĕнле ыйту сÿтсе яврăр вара?

-К о н ц е р п р е в е н ц и я г а с т р о э з о ф а г е а л ь н о й рефлюксной болезни, - хуравларĕ хĕрĕ çăвăнмалли пÿлĕме кĕнĕ май.

- А – а – а…

Кукашшĕ аслă мăнукĕ çине ыйтуллăн пăхса илчĕ. Лешĕ, тухтăра вĕренекенскер, куçарса пачĕ:

- Рак чирĕ варта аталаннине чарни.

Кукашшĕн кăмăлĕ телейпе тулчĕ.

## Мĕн вăл çурла?

Хĕрÿ мунчара хурăн милĕкĕпе çан çурăма ислентернĕ хыççăн чун уçса калаçма кăмăл туртать теççĕ. Чăн та çапла иккен. Ветеран кĕнекипе ман умра кассăран йÿнерех билет илекенни тус – пĕлĕм пулса тăчĕ. Çапла хула мунчине пĕрле кĕтĕмĕр. Эпĕ ун хулайĕнчи кивĕ суран çĕввипе кăсăклансан пуçларĕ вăл хăй калаçăвне.

- Çу-ук, ку вăрçă суранĕн çĕвви мар… Эп ун çинчен пачах маннăччĕ – ха, «Ĕç ветеранĕ» медаль илнĕ хыççăн аса илтĕм. Пиллĕкмĕш класра вĕренекен мăнукăм медаль çинчи çурлапа мăлатука курсан: «Мĕн вăл çурла, мĕн тума кирлĕ?» - тесе кăсăкланчĕ.

…Вăл кун ирех хĕвел хĕртрĕ. Ултăри ачапа çитмĕл ултăри кукамай сăртри вăрманта хăрăк-харăк пуçтаратпăр. Хăрнă йывăççем шыраса вăрмана шалах, хырлăх хыçĕнчи вĕтлĕхех çитетпĕр. Кукамай вăрăм çапăсем сĕтĕрет. Вĕсене пĕчĕк урапа çине аяла тиемелле, çиеле ваккисем те кĕреççĕ. Вара сăртран çăкпа аннă чух урапа туртине çĕклетерсе тормозлама пулать. Эпĕ урапа çывăхĕнче пуçтаратăп. Кукамай вăрăммисене шыранă май хăш чух аташса та каять. Эп вăхăт – вăхăт кăшкăрса сас паратăп.

Пĕррехинче майăра пĕчченех кайсан, кукамай çĕтсе кайнă та вăрмантах çĕр каçнăччĕ. Тепĕр кунхине вара çур михĕ шĕкĕлченĕ майăр илсе килчĕ.

Паян та, урапана кĕмен çапăсем юлсан кукамай мана вырăнне лайăх астума хушрĕ. «Çурла та илсе килĕпĕр, качака валли пĕрик кĕлте курăк хурса кайăпăр», - терĕ.

Уяр кунсенче эпир вăрмана иккĕ хутлаттăмăр. Атте сарăмсăр



вилнĕ хыççăн, анне хысвана чул кăларнă çĕре çÿрерĕ. Колхозра ĕçлекен пулманран – и, Тимук бригадир пуç çапмасăр лаша памасть тенипе –и пире ут лекмен. Хĕлле валли вут - шанкине кукамайпа иккĕнех хатĕрлесе çитереттĕмĕр. Туп – тулли тиенĕ урапана вăрман хĕрне сĕтĕрсе çитерсен, яланхи пек, ват юман сулхăнне канма лартăмăр.

Пирĕн кукамай пуш хирлĕ, вăрмансăр тăрăхра çуралнăран-ши, çырма тăрăх вырăнаçнă кукаçейĕн ялне питĕ мухтатчĕ. Уйхирсен хÿхĕмĕпе савăнатчĕ. Мĕнле уяр, типĕ çул пулсан та чатра лаптăкĕнче ыраш лайăх ÿснине, выçлăх вăхăтĕнче пирĕн сĕтел çинче ыраш çăкăрĕ татăлманнине асăнатчĕ. Кукаçей те пит ĕçчен: çĕвĕ çĕлеме те, урапа çапма та, пичĕкесем тума та ăста пулнă. «Сĕрме купăсне те хăех турĕ вĕт. Колхоз йĕркеленсен кăна çука хăврчĕç çав: икĕ лашапа тырă хумалли кĕлете, выльăх картишне, пур пек тырра, юлашкинчен кăвас çăрма хатĕрленĕ такана çинчи çăнăха та илсе кайрĕç вĕт харампырсем», - тарăхатчĕ кукамай.

Эпир канма ларнă вырăнтан Шуратăл тăрăхĕнчи Шихан тăвĕсем, завод трубисем пит лайăх курăнаççĕ.

- Тепĕр эрнере, ак, хăмла çырли сутма хулана кайса килĕпĕр, пĕремĕк, шурă кулачă илĕпĕр, - мана сăмах парса, хавхалантарса, кукамай калушне хывса çăк çине хĕстерчĕ, вара иксĕмĕр те çара уран ялалла уттартăмăр.

Кĕпер урлă каçсан, Улаккай тăвалине сĕтĕрсе хăпартма, шыва кĕме каякан арçын ачасем пулăшрĕç. Çапла çăка чиперех киле çитертĕмĕр.

Урапана пушатсан кукамай пÿрте чей ĕçме кĕчĕ, мана вăрмана тепĕр хут каймалла тесе килтен каймасса хытарчĕ. Вăл алăкран кĕрсенех эпĕ, шăрăха тÿсеймесĕр, Петрей аварне

шыва кĕме шăтартăм.

Эх, çырми вăл вăхăтра!.. Шывĕ тăп – тăрă. Кашни кукăрта çăл куççем тапса тăраççĕ. Авăрсем епле тарăн! Çыран хĕрринче хускалмасăр выртсан, чавса тăрăшĕ партассем ипсе çўренине те курма пулатчĕ.

Авăрта пĕр кĕтў арçын ача шывра шăмпăлтатать. Пысăкраххисем çыран хĕрринчен чăмаççĕ. Эпир ăшăкрах çĕрте шăнса шăлсем шаккама пуçличчен ишетпĕр. Вĕри хăйăра чакаласа ăшăнма кĕрсе выртатпăр. Кĕтмен çĕртен çырма хĕррине кукамай килсе тухрĕ. Çаппа-çарамас ачасем пурте шыва сикрĕç. Эп йĕме тăхăнтăм та кĕпене илсе тарма шут тытрăм.

- Тăр вырăнта, ĕçрен тармаççĕ, калаппине итлеççĕ,- тесе кукамай алăран пырса тытрĕ те çумĕнчи çурлипе, тўпter енĕпе, кутран çапкаласа илчĕ. Эп вĕçерĕнес тесе турткаланма пуçласан çурла пĕкки тата хытăрах лекрĕ. Çав хушăра хул айĕнчен юн тухма пуçларĕ. Çурла вĕçĕ лексе суран тунă иккен. Кукамай ăна шывпа çурĕ, хупахпа хупларĕ те чĕрçитти çыхрĕ. « Арçын пул, ан нăйкăш. Çурлана тытса пыр, атту ўксе юлатьн», - текелесе пĕчĕк урапана вăрманалла туртрĕ.

Çапла кукамайăн суран палли те пурăнăçра çав çурлапа мăлатукă медале илме пулăшрĕ пуль, - вĕçлерĕ калавне тусăм..





# ИШТАР, ПАР ĂС

«В Вавилонской астрологии планета ВЕНЕРА олицетворяет собой ИШТАР, богиню любви и материнства, исцеляющую и покровительвующую всему растущему». Звездный путь астрологии. Н Т – Центр 1993г стр. 11.





## САВНĂ САМАНТ

Каç чаршавĕ сирĕлсен,
Çич çăлтăрлă алтăртан
Уçлăха мерчен сапсан,
Чĕри çунать савнисен.

✓ Кӳлĕре тӳпе курсан,
Пулăсем çăлтăр пухсан,
Шăпчăксем юрă тăксан
Çуллахи савнă самант!

Çав манăçми каççенче
Юна вĕретрĕ туту,
Çуралчĕ ман чĕрере
Нихçан сӳнми юрату.

## Çумăр

Ăшă çумăр тапларĕ
Аслатиллĕ кĕрлесе.
Çамрăк хурăн кашларĕ
Кăтра çÿçне силлесе.

Çулçă çурса пĕтмесĕр
Çĕмĕрт çеçкене ларчĕ,
Йĕрме ларан хĕр евĕр
Шур пĕркенчĕк пĕркенчĕ.

Пехиллерĕ çĕмĕрте
Аслатиллĕ лĕп çумăр:
Йышлă çырла ÿстерме
Çĕр сĕткенĕ пулăштăр.

...Чĕре вутне сÿнтертĕм
Тăрса çĕмĕрт айĕнче.
Куççуль йĕрне пĕтертĕм
Çуса çумăр шывĕнче.



## ХУРĂН ШЫВĔ АНСАН

Çурхи вăрман варринче
Сирсе кăтра çивĕтне
Шурă хурăн кăкринчен
Сыпрăм сиплĕ сĕткенне.

Тăри сенкер тÿпере
Савăнтарчĕ юррипе,
Кайăксем те çурçĕре
Вĕçсе иртрĕç картипе.

Çунат сарсан çуркунне
Мăшăр шырать кашниех.
Çавăнпа пуль пĕр-пĕрне
Савас килет хĕрÿрех.

Илĕртÿллĕ хĕр- пике
Хĕмлĕн пăхсан куçăмран,
Çурхи кунсен еккипе
Канăç- тăнăç пĕтрĕ ман.

Çурхи вăрман варринче
Сирсе кăтра çивĕтне
Шурă хурăн кăкринчен
Ма сыпрăм – ши сĕткенне?

## КĔТЕТĔП ЭП КУЛЛЕНЕХ

Сăртри вăрман тӳпинчен
Лапка – лапка юр çăвать,
Шур хурăн тураттинчен
Капăр çивĕтсем уртать.

Юр хӳнипе, пуснипе
Çĕмĕрт йывăç авăнать.
Çирĕк хавшак пулнипе
Шарт! тăвать те хуçăлать.

Вăрăм чăрăш лăссисем
Ешĕл тĕсне çухатман.
Çу кунĕсен ăшшисем
Паян кунчен манăçман.

Пуçне усман, авăнман
Юр купине Улăп пек
Йăтса ларать ват юман
Хăйĕн çирĕп пĕвĕпе.

Кĕтетĕп эп кулленех
Çĕмĕрт çеçке çурасса,
Чунри сивĕ пăр кĕçех
Тумла пулса юхасса.



## ТЕЛЕЙ

Çумăр сиплĕхлĕ çурĕ
Калчасене вăй парса.
Пике – хурăна аврĕ
Ашкăнчăк çил алхасса.

Ăшă çумăр çутăрах
Шур чечекĕме çуса.
Ман чĕреçĕм таптăрах
Çĕнĕ кунпа савăнса.

Çумăр хыççăн сар хĕвел
Ăшшăн лăпкĕ пуçăмран.
Иртнĕ пурнăç - йӳç йĕкел –
Катса тутанса пăхсан.

Çул хĕрринчи юман пек
Ӳсрĕм пĕччен ачаран.
Ту тăрринчи чăрăш пек
Хӳтлĕхре пулса курман.

Телей тупрăм ăнсăртран
Сар пикепе тĕл пулсан:
Хĕпĕртерĕм пурнăçран
Пепкесемпе çурт тупсан.

## Сĕнӳ

Хĕрӳ, хӳхĕм пикене
Турă пӳрнĕ юратма,
Çырла евĕр тутине –
Яш савнийĕ чуп тума,

Тулли икĕ кăкăрне -
Йышлă пепке ӳстерме,
Çемçе çепĕç чĕлхине –
Чĕкеç евĕр пӳплеме.

Анчах пур – ха тĕнчере
Чес тăшман, чĕмере –
Хĕре пирус хыптарса
Ярасшăнах вăл чире.

Çамрăк хĕр пирус туртсан
Малашлăхĕ çук ачан.
Калатăп чун – чĕререн:
«Çав мура ес ан тутан.

Чăваш пики авалтан
Ăна çăвара хыпман,
Çавăнпа çут тĕнчере
Чăваш чĕлхи çухалман».



## Шухăшăмсем

Йăлтăркка юр çиййĕпе
Йĕлтĕрĕмпе шăватăп.
Шух вĕрекен çилĕпе
Кăмăлăма уçатăп.

Эх! Çанталăк илемлĕ,
Сенкер куçлă пике пек.
Ăшăтаймасть хĕвелĕ -
Юта кайнă савни пек.

Çырла пиçес çарансем
Юр айĕнче, ыйхăра.
Яштак пӳллĕ хурăнсем
Кĕрт ăшĕнче хуйхăра.

Килсе çитĕ çуркуне
Хĕвел пăхĕ ăшăтса.
Юр ирĕлсе кӳль енне
Юхса кайĕ шарласа.

Манăн кăна пуçăмри
Шурă çӳçĕм хуралмĕ,
Çамрăклăхăм инçетри
Çурхи кун пек килеймĕ.

## Кĕреш юман

Вăрман хĕрринчи сăртра
Пĕр – пĕччен ларать юман.
Вăрманта, шалта вара
Шурă хурăнлăх куран.

Хĕллехи юр пусăмне,
Асар – писер тăвăлне
Чăтса иртерет юман –
Çил куллиййĕ вăл пулман.

Çуркуннепе хурăнсем
Çулçă çурчĕç чи малтан.
Çеçкере, ав, çĕмĕртсем –
Капăрланнă сĕм вăрман.

Асап курнă ват юман
Кăчăкисене уçман.
Çурхи ăшша шанмасăр
Çу кунне кĕтет хаман.

Çурхи çеçке тăкăнать
Пĕрре сивĕ витнипех.
Савнă пике ютшăнать
Сивĕ сăмах илтнипех.



## Куçри кăвар

Вут чĕртеççĕ куçăмра
Кĕрхи хĕрлĕ çулçăсем.
Ялкăшаççĕ чунăмра
Санăн кăвак куçусем.

## Ч ĕ р е м е

Ачама юратнăран
Чĕреме ăна паратăп.
Ача виççĕ пулнăран
Ăна виç пая пайлатăп

## Тур палли

Сенкер куçун хĕлхемĕ
Чĕрере вут хыптарчĕ.
Тур паллийĕн илемĕ
Шурă пуça çавăрчĕ.

## Уçă пулсан

Алăка уçса хурсан
Шăнасем кĕрсе тулаççĕ.
Чунăма уçса парсан
Атăпа ăна таптаççĕ.

## Кăмпа

Йывăç хыçне пытанса
Хăтăлса юлас шутпа,
Çут хĕвелтен вăтанса,
Кĕтет мана сар кăмпа.

## Кĕрхи кĕвĕ

Капăр вăрман йăлкăшать:
Кăвар тĕслĕ пилешĕн
Çулçи çĕре тăкăнать.
Тен, кавирпе витесшĕн?

Тăрнасем, ав, тӳпере
Кăнтăр енне вĕçеççĕ.
Кăрлик! теççĕ те, пире
Пĕрле вĕçме чĕнеççĕ.

Кайăк пулса каям-ши
Çичĕ юта вĕсемпе?
Çĕнĕ йăва кăрам-ши
Унти ăшă çĕрсенче?

Эх! Тăрнасем, сирĕнпе
Вĕçейместĕп кăнтăра.
Хăрамастăп сивĕрен.
Хĕл каçасси - Турăра.

Çак çуралнă çĕршывра
Пархатарлăх эп тупрăм.
Пĕрре савнă тантăшра
Ырă шанчăклăх куртăм.



## Юрпа сивĕнмен кăвар

Çĕмĕрт çеçки евĕрех
Пĕрчĕн – пĕрчĕн юр ӳкет.
Ма – ши çу кун питĕрех
Хĕлле тин аса килет?

Çимĕк каçĕ иксĕмĕр
Телей тупнă вăхăтра:
«Пĕрле иртерер ĕмĕр» –
Тени халĕ те асра.

Шăнса кӳтсен - ăшăтма,
Аташсассăн - çул тупма,
Пĕрне – пĕри пулăшма
Тунăччĕ ун чух тупа.

Каçхи сулхăнри вучах
Пултăм саншăн тĕттĕмре.
Кирлĕ пулмарăм пачах
Хĕвел хĕртсен тӳпере.

Юрпа сивĕнмен кăвар –
Пилеш сапакин варри.
Суранăм çинчи тăвар
Пулчĕ – çке иртни, асри.

## Шурă юмăç

Уй – хирти çул хĕрринче
Сиплĕ шур чечек ларать.
Унăн шур кăшăлĕнче
Шĕл - кăваррăн йăлкăшать.

Çулăм тивнĕ чĕрепе
Савни тухать уй – хире.
Шур чечек илĕртнипе
Хытăрах тапать чĕре.

Чун телейлĕ пулĕ-ши?
Пĕлме пулăш чечекĕм:
Савĕ-ши е савмĕ-ши
Хура куçлă савниййĕм?

Чечекĕн шур çунатне
Пĕрчĕн – пĕрчĕн вăл татать.
Варли ăна савнине
Чечек тĕрĕсне калать.



## Тăварйышсем

## Раççей - Пушкăртстан: 450 çул

*«Сĕтел çинчи çитмен тăвара çурăм çинчи ирттерет».*
*Ваттисен сăмахĕ.*

Сĕм – сĕм авал тăвара,
Ылттăн парса илнĕрен,
Упранă тет арчара.
Çуклăх пулнă килĕрен.

Икмĕш Кĕтерне патша
Хушу кăларнă вара.
Илек енчи тăвара
Миллион пăт куçарма.

Виç юханшыв черетлĕн
Шур Атăла юхаççĕ.
Инçе те мар ĕретĕн
Шихан тусем лараççĕ.

Ту хыçĕнчи сĕм вăрман
Çӳл тӳпене тĕкĕлет,
Хырсен тăррине пăхсан,
Пуçри шĕлепке ӳкет

Ку вырăнта авалах
Ям çулĕпе ял пулнă.
Виçĕ ĕмĕр каярах
Тăвар хули пуçланнă.

Илек мулне лавсемпе
Стерлĕ енне туртарнă.
Çуркунне сулăсемпе
Хусан енне юхтарнă.

Кайса килме Илеке
Стерлĕрен çур пин çухрăм.
Тăвар хыççăн хĕлле те
Обоз пулнă пит вăрăм.

Патша хушнипе тума
Тĕрлĕ халăх пухăннă.
Йывăр ĕçе ăнтарма
Чăвашсем те тупăннă.

Кăткăс ĕç йĕркелеме
Эртелсене уйăрнă.
Пĕр-пĕрне «Тăварйыш» теме
Эртелсенче тытăннă.

ИШПАРС тесе ятĕнчен
Тăвар сутуçне чĕннĕ.
Унпала Хусан енчен
Йышлăн чăвашсем килнĕ.



Инçе те мар хуларан
Ялăн никĕсне хывнă.
Çак ялĕн ятне вара
«Ишпарсово» çыртарнă.

Хайхи тăвар пристаньне
«Стерлитамак» ят тивнĕ.
Ку хулан гербĕ çине
Виç хур кайăк ӳкернĕ.

Пушкăртстан – аслă тăван,
Стерлитамак - çав шутран.
Ишпарсово хуларан
Çуралнă тăват çул кайран.

Çичĕ ял чăвашсенчен
Хула çывăхне ларнă.
Çул Илеке çитиччен
Тăварйышсемпе тулнă.

«Тăварйыш» ют чĕлхесенче
«Товарищ» илтĕннĕ пулас.
Ку- Пушкăрт çĕрĕ çинче
Туслăх пулни çинчен сас.

## Тивлет ăçта?

Çырла пиçнĕ улăхра –
Пыл курăкĕ çеçкере.
Ырă шăршă сывлăшра,
Килентерет вăл пире.

Хăнари пек çанталăк
Пыл ĕçтерчĕ хистесе.
Урă пултăм çулталăк –
Халĕ ячĕ ўсĕртсе.

Кăтра хурăн тантăшсен
Çумне пырса таянтăм.
Çил йывăçпа пĕрлешсе
Канаш тытнине туйрăм.

Пăшăл – пăшăл çулçăсем
Манран ыйтнăн туйăнчĕ:
«Йăл кулаççĕ тутусем –
Тивлет ăçта тупăнчĕ?»



## Йăмра айĕнче

Кайăк хурсен çулĕнчен,
Çăлтăр ўкрĕ тўперен.
Тулли уйăх çутипе
Ачашларĕ питĕмрен.

Капăр çўçлĕ ват йăмра
Çупăрларĕ пуçăма.
Яш вăхăтăм асăмра –
Пăркăчларĕ чунăма.

* * *

Чĕре пек çăкан çулçи,
Куçăма пит илĕртет.
Шурă черченкĕ çеçки
Тĕрлĕ чир – чĕртен сиплет.

## АННЕМ

Кăра çилĕ хыт лăскарĕ,
Аврĕ çамрăк хурăна.
Йывăççăм, çук, хуçăлмарĕ
Хўтлĕх юман тăнăран.

Пурăнăçра нуша куртăм,
Чухăн ўсрĕм ачаран.
Аптрамарăм, ăс пуçтартăм
Ăслă аннем пулнăран.

* * *

Тăкăнаççĕ çулçăсем
Шупкаланса кĕр çитсен.
Ма васкаççĕ яш çулсем
Чарăнăвĕ çук вĕсен.

Иртсессĕн те çамрăклăх
Хурланмашкăн сăлтав çук:
Чун – чĕре савăнмалăх
Ас илӳсен вĕçĕ çук.

## ТУНСĂХ

Кирек ăçта кун куллап - и -
Чун туртать тăван яла.
Манма май çук Тип Çырмари
Улăм витнĕ кил-çурта.

## Хĕрлĕ палан

Кĕрхи тĕспе çуннăçем
Хĕвел çинче выляса,
Ай, вĕçеççĕ çулçăсем!
Кайăк евĕр ярăнса.

Палан пĕрчи - çут мерчен
Уйрăлаймасть йывăçран.
Хăрамасть вăл сивĕрен –
Юн пек хĕрлĕ пулнăран.



## ИРХИ ТЕЛЕЙ

Кăвар евĕр шăранса
Тухать хĕвел тӳпене.
Ёнĕрлесе юрпаса
Сăвать пике ĕнине.

Инçетри сĕм вăрманта
Ӳхĕ темшĕн ӳхлетрĕ.
Малти улăхра – шалта
Шăпчăк уçлăх чĕтретрĕ.

Яш вăхăтри пек ирпе
Аслăк çинче вăрантăм.
Утрăм çимĕç пахчипе,
Чечексене шăвартăм.

Сывлăмлă курăк çинче
Çарран ача пек чупрăм.
Кăмăл çĕкленчĕкĕнче
Ирхи телей эп тупрăм.

## Сивĕре

Уяр сивĕ çĕре çурать,
Сивĕ сăмах-чĕре çурать.

## Вйтă йăмра

Хула шавĕнчен писсен
Çул тытатăп ялăма.
Тип Сырма патне çитсен-
Çăл пĕвине, айлăма.

Асăмра: ача чухне,
Сынсем, анса çырмана,
Пĕвелетчĕç çуркунне
Ĕçлетерме армана.

Тайăлнăччĕ çăл енне
Виç хăлаçлă ват йăмра,
Эп улăхса ун çине
Сăнанă партас шывра.

Яш вăхăтра каç пулсан,
Кĕтнĕ чухне савнине
Йăмра мана пуçăмран
Ачашлатчĕ çулçипе.

Паян кун сывă йăмра!
Миçе тулчĕ – ши сана?
Мучей калани асра:
«Икçĕр çул ытла ăна!»

Кĕрнеклĕ пĕвӳ санăн-
Тĕлĕнтерет куçăма.
Вăрăм ĕмĕрлĕ пурăн,
Килентер мăнукăма.



* * *

Çĕмĕрт çеçки юр пек кăпăш
Пит илĕртет – çке куçа.
Çурхи сим пыл пекех сывлăш
Ма – ши çавăрать пуçа?

## Хĕвел тухнă чух

Кăвар - хĕвел тухнă чух,
Тӳпене чĕнтĕрлесе,
Хавхаланать манăн чун
Çĕн кунпа хĕпĕртесе.

Чив-чив кăсăя хавассăн,
Пилеш туратти çинче
Пуçне пăрать – курасшăн
Кантăкран пӳрт хуçине.

Таçта вăрман хĕррипе
Карăш чĕппи макăрать.
Сарă хĕвел хĕртнипе
Пĕтĕм тĕнче вăранать.

Ирхи сывлăм – куççульсем
Шур чечекĕн типеççĕ.
Юрату суранĕсем
Чĕремре ӳт илеççĕ.

## Суя хисеп

Куккук илемлĕ сассипе
Суя хисеплĕ пулать.
Ют йăвара вăл ӳснипе
Чĕпĕсĕр шăпчăк юлать.

## Манăн чĕлхе

Çăкăр çитерекен чĕлхе -
Вырăс чĕлхи - ютран килни.
Чĕре тапмаракан чĕлхе –
Чăваш чĕлхи - юнпа килни.

## Асри мул

Вĕлтрен яшки, ыраш çăкăр -
Выç хырăма лăш тунă.
«Вĕрен, ĕçре пул паттăр» –
Тенĕ мул асра юлнă.



## Çурхи муза

Кăрли-и-ик! Кăрли-и-и-ик! сас парать
Пĕччен тăрна тӳпере.
Салху туйăм çуратать
Унăн сасси чĕрере.

Чĕнет-ши вăл мăшăрне?
Хăй аташса юлман-ши?
Ырнă пулсан кӳл хĕрне
Ма-ха канма анман-ши?

…Вĕçрĕ тăрна çурçĕре
Сывлăш хумне çĕнтерсе.
Пăхса юлтăм тинкерсе,
Темшĕн ыратрĕ чĕре.

Хурăн çинчи шăнкăрчсем
Çунат çапса юрларĕç.
Шăрçа евĕр тумламсем
Ывăç çинче ташларĕç.

## Сӳнми хӗлхем

*Валери Туктара саламласа.*

Пӑшӑлтатса ӑшшӑн умра
Калаҫаҫҫӗ хурӑнсем.
Кавир пекех йывӑҫ тавра
Лӑп выртаҫҫӗ ҫулҫисем.

Капӑр тумне мӗншӗн хывап
Пилешӗм, кӗр ҫитсенех?
Сивӗ ҫумӑр, мӗншӗн ҫӑван
Ҫу кунӗсем иртсенех?

Ӳсиӗ ҫӗршывран уйрӑлса
Ма каяҫҫӗ кайӑксем?
Хӗл иртсессӗн таврӑнасса
Пит шанаҫҫӗ - ши хӑйсем?

Яш вӑхӑтӑм кайӑк пулса
Тепре вӗҫсе килтӗр – ха.
Сӳнмен хӗлхем ӑшра ҫунса
Кӑвар пек ялкӑштӑр – ха.



## ИШТАР, ПАР ӐС

Хӗвел тавра ҫаврӑнса
Планетӑсем ҫӳреҫҫӗ.
Ҫутӑ ҫӑлтӑр пек ҫунса
Куҫа пит илӗртеҫҫӗ.

Пӗлме пулать тӗпчесен
ИШТАР ҫӑлтӑр пулнине,
Чи ҫутӑран Шумерсен –
АННЕ ТУРӐ тенине.

Гараскопра ку ИШТАР
Халь ВЕНЕРА ҫырӑнать,
Юратура хевте парать.
ИРХИ ҫӑлтӑр шутланать.

Тӗне кӗмен чӑвашсен
Хушаматсӑр ят пулнӑ.
Турӑран ӐС ыйтса
Ачасен ятне хунӑ.

«ИШТАР ПАР ӐС» - тейиччен
«ИШПАРӐС» – кӗскен чӗннӗ,
Тата вырӑс чӗлхинче -
«ИШПАРС» - пулса кӗскелнӗ.

Тӑвар сутӑҫ - ИШПАРӐС
Стерлӗ енче ял хывнӑ.
Кайран ку яла вырӑс
ИШПАРСОВО - ҫыртарнӑ.

Хĕрсенче те чăвашсен
ĂС сыпăклă пур ятсем.
НАРСПИ пулать тĕслĕхрен,-
Виç сăмаха кĕскетсен.

НАР та ĂСЛĂ пул ПИКЕ,
Ят хурсан - НАР ĂС ПИКЕ,
Кĕскетсе çырсан - НАРСПИ,
Калать чăваш – НАРĂСПИ.

Авалхи сăмахсене
Чĕлхе кирлĕ упранма.
Çак илемлĕ ятсене
Турă хушмантăр манма.

## ЧУН ВĔРИ

Виçмен мулне - мерченне
Хĕвел сапнă юр çине,
Йăлтăр – ялтăр çуттийĕ
Тирĕнет куçăмсене.

Ватăлнă хуп тунине,
Вăрăм ўснĕ çивĕтне
Шур пĕркенчĕкпе витсе
Пулнă йăмра - хĕр пике.

Эреветлĕ чĕнтĕрлĕ,
Шурă çинче хĕрлĕллĕ,
Лутра тĕмлĕ паланĕ –
Кĕске хитре кĕрĕклĕ.



Асамлă Çанталăкне,
Çăтмахри ўкерчĕкне,
Тур панă пуль киленме -
Ярри уçса алăкне.

Сенкер Тинĕс тўпери
Лăпкă паян çав тери.
Çунат сарса уçлăха
Вĕçетĕп – ха. Чун вĕри.

## Атте

Атте вăл – Тăван çĕршыв,
Вăрçă хирĕ, юнлă шыв, -
Çавăнпа та пирĕн тен
Хушамат пулать аттен.

Маншăн Атте - çухату,
Чун-чĕрери ырату.
Сăн ўкерчĕкри салтак –
Çавă юлнă - йăпату.

Атте, тени – мăнаçлăх
Тата пысăк яваплăх.
Çакна чунпа ăнланан
Атте! чĕнме пуçласан.

## КУҪҪУЛЬСЕМПЕ ҪКЕҪҪĔ

Юр пĕрчисем тӳперен
Ӳкеҫҫĕ те ӳкеҫҫĕ.
Шухăшăмсем инҫетрен
Вĕҫеҫҫĕ те килеҫҫĕ.

Пирвайхи юратăвăм
Хĕмленет - сӳнми кăвар,
Кĕлленет манăн туйăм,
Ыратать суран-тымар.

Ик ҫиврĕтлĕ ҫӳҫӳсем
Яш туйăма пăлхатрĕҫ.
Хĕмлĕ кăвак куҫусем
Чун-чĕрене ҫунтарчĕҫ.

Эх! Мĕнле ҫав киленсе
Хӳхĕм кевтӳне саврăм.
Шăпа пӳрменне пĕлсен
Хурланăва эп путрăм.

Юр пĕрчисем тӳперен
Куҫăм ҫине вĕҫеҫҫĕ,
Тумла пулса питĕмрен
Куҫҫульсемпе ӳкеҫҫĕ.



## Яратăп евчĕ...

*«Урал сасси» хаҫатăн*
*ĕҫченĕсене халалласа*

Шурă-шурă хурăнсем-
Шур чăвашăн пикисем,
Йĕрме ларнă хĕрсем пек
Шур пĕркенчĕклĕ вĕсем,

Хĕлĕн капăр тумĕпе,
Кĕр мулĕ те туплипе
Туй ҫитессе кĕтнĕ пек
Ларнă рет кĕрт хӳмипе.

...Килсе ҫитсен Ҫуркунне
Хывĕ сирĕн хĕл тумне,
Туй пуҫланĕ кĕрлесе
Сар Хĕвелĕн чуппипе.

Ҫунат ҫапса кайăксем,
Шăнкăртатса ҫырмисем
Юрă пуҫлĕҫ савăнса-
Кирлĕ тата ташăсем.

Чĕнĕр ҫак туя мана,
Ярăп кунта эп ташша.
Шур ҫӳҫĕме пăхмасăр
Яратăп евчĕ мала.

* * *

Çăлтăр çутă çунсан та
Кăнтăрла пулмасть курса.
Ăшра кăвар пулсан та
Ăскăча пулмасть хурса.

# САВНĂ ЯЛĂМ - ЯМАНСАС

## Юрă евĕр

Шур Аталăн лаппинче
Шихан тусем лараççĕ,
Леш айăкки сăртĕнчен
Ял çумĕнчех курнаççĕ.

Хушса юрламалли
Ирпе хĕвел тухнă чух
Мĕншĕн çăлтăр сÿнет-ши?
Савнипе чуп-чуп уйăх
Мĕншĕн кĕске пулать-ши?

Улăхра çырла çисе,
Çăлта сивĕ шыв ĕçсе
Ÿснипе эп пит хавас
Савнă ялăм Ямансас.

Харсăр тапакан чĕре
Юратрĕ сарă хĕре,
Пиллесе Иштар çăлтăр
Саврĕ çуттипе пире





***Лилита справа - дочка,***
***Лэйсан слева - внучка.***
***Это счастье - Божий дар,***
***Может, богини Иштар?!***

## САВНӐ ЯЛӐМ ЯМАНСАС.

## ТУПМАЛЛИ. Калавсем.


Ямансасӑн хастар ачи ........ 3
Ямансас е Ишпарӑс, хӑшӗ тӗрӗсрех? ........ 5
1. Физпа Лир ........ 8
2. Виҫӗ хурӑн ........ 11
3. Тинӗс тыткӑнӗнче ........ 15
4. Кӗтрет ........ 18
5. Тӗслӗх илни ........ 21
6. Колхоз лаши мыскари е 54 «Ехим Васильч» ........ 24
7. Гитара ........ 27
8. Кӑвак автан ........ 30
9. Диалогри телей ........ 33
10. Мӗн вӑл ҫурла ........ 34
ИШТАР, ПАР ӐС ........ 37
Сӑвӑсем.
1. Савнӑ самант ........ 39
2. Ҫумӑр ........ 40
3. Хурӑн шывӗ ансан ........ 41
4. Кӗтетӗп эп кулленех ........ 42
5. Телей ........ 43
6. Сӗнӳ ........ 44
7. Шухӑшӑмсем ........ 45
8. Кӗреш юман ........ 46
9. Куҫри кӑвар ........ 47
10. Чӗреме ........ 47
11. Тур палли ........ 47
12. Уҫӑ пулсан ........ 47




13. Кӑмпа ........ 47
14. Кӗрхи кӗвӗ ........ 48
15. Юрпа сивӗнмен кӑвар ........ 49
16. Шурӑ юмӑҫ ........ 50
17. Тӑварйышсем ........ 51
18. Тивлет ӑҫта? ........ 54
19. Йӑмра айӗнче ........ 55
20. Чӗре пек ҫӑкан ҫулҫи ........ 55
21. Аннем ........ 55
22. Тунсӑх ........ 56
23. Хӗрлӗ палан ........ 56
24. Тӑкӑнаҫҫӗ ҫулҫӑсем ........ 56
25. Ирхи телей ........ 57
26. Сивӗре ........ 57
27. Ватӑ йӑмра ........ 58
28. Ҫӗмӗрт ҫеҫки юр пек кӑпӑш ........ 59
29. Хӗвел тухнӑ чух ........ 59
30. Суя хисеп ........ 60
31. Манӑн чӗлхе ........ 60
32. Асри мул ........ 60
33. Ҫурхи муза ........ 61
34. Сӳнми хӗлхем. (Валери Туктара саламласа) ........ 62
35. Иштар, пар ӑс ........ 63
36. Чун вӗри ........ 64
37. Атте ........ 65
38. Куҫҫульсемпе ӳкеҫҫӗ ........ 66
39. Яратӑп евчӗ…
(«Урал сасси» хаҫат ӗҫченӗсене халалласа)… ........ 67
40. Ҫӑлтӑр ҫутӑ ҫунсан та … ........ 68
41. Савнӑ ялӑм Ямансас ........ 68

САВЕЛИ УВАРĔ

# САВНĂ ЯЛĂМ - ЯМАНСАС

Калавсем. Сăвăсем.

Милая деревня - Ямансас

Рассказы. Стихи.

Редактор: Иванов Николай Димьянович (Микул Ишмбай)

Корректор: Уваров Алексей

Компьютерный набор: Уваров Алексей

Компьютерная верстка: Хабибуллина Расиля

Фото: Фаттахов Борис

Подписано в печать

Уч.-изд. Гарнитура «Times New Roman»

Тираж 150. Зак. 1409.

60235 - 47767 г/з

Отпечатано в Стерлитамакской городской типографии:

453124, ул. Комсомольская, 82.

